*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЮНКУН

91 (2503) [1]
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

2014,
ноябрь/чӳк, 26

1991 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

КУÇА-КУÇĂН

# Халăх фрончĕ – витĕмлĕ вăй

Ноябрĕн 17-18-мĕшĕсенче Мускавра Пĕтĕм Раççейри Халăх фрончĕн иккĕмĕш форумĕ иртнĕ. Унта Халăх фрончĕн активисчĕсем, Раççей Президенчĕн шаннă çыннисем, бизнес пĕрлĕхĕн, РФ Правительствипе ведомствăсен представителĕсем, политологсем хутшăннă. Форумра экономикăн пĕлтĕрхи тата кăçалхи аталанăвне, социаллă пурнăçăн тĕрлĕ пулăмне тишкернĕ, РФ Президенчĕн май уйăхĕнчи указĕсене пурнăçлама мĕнле сăлтавсем чăрмантарнине сӳтсе явнă. Çавăн пекех çĕршыв Президенчĕ Федераци Пухăвне Çырупа тухма хатĕрленнĕ май унта сĕнӳсем кĕртнĕ.

Форума пирĕн республикăран Халăх фрончĕн уйрăмĕн çум председателĕ Николай Казаков, регионти ĕçтăвкомăн ертӳçи Николай Косыев, Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн шаннă çыннисем – Афганистан вăрçин ветеранĕсемпе инваличĕсен Пĕтĕм Раççейри общество организацийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн ертӳçи Геннадий Матвеев, «Хыпар» Издательство çуртĕн директорĕ-тĕп редакторĕ Валерий Туркай, Раççей Федерацийĕн Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ Валентина Теллина – хутшăннă. Общество хастарĕсем 5 дискусси площадкинче ĕçленĕ.

Вĕсем иртнĕ эрнере журналистсемпе тĕл пулчĕç.

«Çынсене кивĕ тата ишĕлекен çуртсенчен куçарасси питĕ калаçтарчĕ, – терĕ Николай Казаков. – Кăçалтан кунашкал çуртсем çине хăмасем çырса çапаççĕ. Унта çынсене хăçан, ăçта куçарассине палăртнă. Срока пăхăнмасан чиновниксен пĕр кунра 5 пин тенкĕ штраф тӳлеме тивĕ. Халĕ «ишĕлекен çĕнĕ çурт» ăнлав та пур. Вăрланăран хăшпĕр тăрăхра каяш материалсенчен çуртсем тăваççĕ. Вĕсенче пурăнма май çук. «Паллах, çакă йĕрке сыхлавĕн органĕсен çивĕч ыйтăвĕ», – терĕ кун пирки Владимир Путин. Мана çавăн пекех налуксене виçĕ çула çакнашкалах хăварма килĕшни савăнтарчĕ. Ку сĕнĕве çĕршыв Президенчĕ Федераци Пухăвне яракан Çырура та асăнса хăварĕ. Ял хуçалăхĕ пирки: «Пире мĕн кирлине рынок хăех палăртать», – терĕ вăл».

Валентина Теллинăпа Геннадий Матвеев «Социаллă тĕрĕслĕх» секцире ĕçленĕ. Ку форум малтанхинчен уйрăмрах иртнине палăртрĕç вĕсем. Халăх фрончĕн ĕçне хутшăнакансем экспертсем вырăнĕнче пулнă, РФ Президентне кăçал мĕн тунине каласа кăтартнă. Министрсем вара ыйтусене хуравланă. «Мана Наци медицина палатин ертӳçи Леонид Рошаль сăмахĕ килĕшрĕ, – терĕ




*Форум ĕçне хутшăннă чăвашсем: Валерий Туркай, Геннадий Матвеев, Валентина Теллина, Николай Казаков тата Олег Мустаев (Чĕмпĕр хули)*

Валентина Андреевна. – Вăл медицина ĕçченĕсен йышне оптимизацилени пирки калаçрĕ. Кун пирки граждансемпе те, медицина ĕçченĕсемпе те никам та канашламан. Мĕншĕн больницăсенче койка вырăнĕсене кĕскетнĕ, мĕншĕн ку е вăл сиплев учрежденийе хупнă? Çакна никам та татăклăн ăнлантарма пултараймасть. Çавăн пекех сывлăх сыхлавне укса-тенкĕпе тивĕçтерес ыйту та пулчĕ. Кадрсем те çитмеççĕ. Аслă шкул хыççăн çамрăксем больницăсене ĕçлеме вырнаçмаççĕ, урăх отрасле каяççĕ. 2016 çултан пуçласа сывлăх сыхлавне çĕнĕ вĕренӳ стандарчĕ кĕртĕç. Ултă çул вĕреннĕ хыççăн тухтăрсем медицина учрежденийĕсене ĕçлеме кайĕç. Виçĕ çул вăй хунă хыççăн интернатурăра, ординатурăра малалла пĕлĕвĕсене ӳстерме пултарĕç».

Медицинăпа санитари пулăшăвĕ пирки те хĕрӳ калаçу пулнине палăртрĕ Валентина Теллина. Форумра поликлиникăсене медицина хатĕр-хĕтĕрĕпе тивĕçтермелли, тухтăрсен пĕлĕвне ӳстермелли çинчен те калаçнă. Сывлăх сыхлавĕнче çивĕч ыйту чылай пулнине кура Владимир Путин 2015 çулта апрель уйăхĕнче ятарлă форум иртнерме палăртнă.

Геннадий Матвеева кашниех хăйĕн шухăшне уççăн калама пултарни килĕшнĕ. «Эпĕ сусăр çынсен ыйтăвĕсемпе ĕçлекенсемпе курса калаçрăм. Инвалидсен ыйтăвĕ Раççейре пурне те пăшăрхантарать, анчах та вĕсене пĕр кунта татса параймăн», – пĕлтерчĕ Геннадий Петрович.

Патшалăх туянăвĕ пирки те хĕрӳ калаçу пынă. «Эпир пĕр обществăра, пĕр çемьери пек пурăнатпăр. Çавăнпа та пирĕн пĕр йĕркепе пурăнмалла», – çирĕплетрĕ шухăшне Геннадий Матвеев.

Чăваш халăх поэчĕ Валерий Туркай «Общество тата влаç: тӳрĕ калаçу» секцире пулнă. Ăна миграци ыйтăвĕ шухăша янине каларĕ. Çакна РФ Президенчĕ Федераци Пухăвне çулсерен яракан Çырура палăртасса шанчĕ. Унсăр пуçне хаçат-журнала Раççейре салатас тытăм чакнине пĕлтерчĕ. 1500 çынна 1 киоск тивĕçет пулсан çакă лайăх кăтарту шутланать. Анчах кунашкал кăтарту Раççейре çук. Ку тĕлĕшпе Челябинск, Орел, Калининград хулисем тата Калуга, Челябинск облаçĕсем лайăх ĕçлеççĕ. Чи япăххи – Чечен Республики. Ку пулăма кунта вăрçă кĕрленипе сăлтавлаççĕ. Кунта 20 пин çынна 1 киоск тивĕçет.

«Пенси фончĕ хăйсен çурчĕсене юсаса çĕнетни е çĕнĕрен туни пирки хивре калаçу пулчĕ, – терĕ Валерий Владимирович. – Пĕр регионта Пенси фончĕ хăйĕн керменне тума 3 млрд та 700 млн тенкĕ тăкакланă. Перинатальный центрĕ валли вара – 2 млрд та 400 млн тенкĕ. Ача сачĕсене те пĕр проектпах тăваççĕ. Анчах вĕсен хакĕ тĕрлĕ регионта расна. Чăн та, ĕçлемелли нумай. Кăна Владимир Путин та каларĕ. «Пурте пĕрле канашласа ĕçлер», – терĕ вăл. Пирĕн регионти уйрăм ыттисенчен юлса пырать. Кӳршĕсем – Ульяновск облаçĕ тата Мари Эл – хастар ĕçлеççĕ. Вĕсенчен юлмалла мар».

**Валентина ПЕТРОВА.**

ПУРНĂÇ ТАППИ

## Хура тулă çĕршывра çителĕклĕ

Висĕм кун Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев правительство членĕсемпе, федерацин влаç тытăмĕнчи тата муниципалитетсен ертӳçисемпе эрнесеренхи канашлу ирттернĕ. Малтанах вăл республикăра ача сачĕсем тăвас ĕç мĕнле пынипе кăсăкланнă. Вĕренӳ министрĕ Владимир Иванов пĕлтернĕ тăрăх – хута яма палăртнă 15 ача садĕнчен хальлĕхе 3-шĕнче строительствăна вĕçленĕ. Ыттисенче ĕç пырать, йывăрлăхсем те сиксе тухаççĕ, анчах çулталăк вĕçленичченех мĕнпур ача сачĕ хута каймалла.

Педагогсен ĕç укçине те тишкернĕ. 2012 çултанпа вĕрентекенсемпе воспитательсен шалăвĕ пĕчĕккĕн ӳссех пынă. 2013 çулхи IV кварталта вĕсен вăтам ĕç укçи 20306 тата 23483 тенкĕпе танлашнă. 2014 çулхи I квартал планне çулталăк пуçламăшĕнче ĕç укçи тăруках чакассинчен асăрханса тата республикăри вăтам ĕç укçин прогнозне (çулталăк пуçламăшĕнче вăл 22177 тенкĕ пулнă) тĕпе хурса хатĕрленĕ. Çапла вара ача садĕнчи педагогсен шалăвĕ кăçалхи I квартала 19660 тенкĕпе, шкулти педагогсен 21445 тенкĕпе танлашнă. Республикăри вăтам ĕç укçин прогноз шайĕ улшăнсах тăрать. Çавна май кайран шалу кăтартăвĕ те улшăннă. Октябрь уйăхĕнчен вăтам ĕç укçин шайне республикăра 21250 тенкĕпе танлаштарнă.

Экономика аталанăвĕн, промышленноçпа суту-илӳ министрĕ Владимир Аврелькин ял хуçалăх таварĕн хакĕн ӳсĕмĕпе тата ноябрь уйăхĕнчи инфляци кăтартăвĕпе паллаштарнă. Чăвашстат пĕтĕмлетĕвĕпе кăçалхи октябрь уйăхĕнчи инфляци пĕлтĕрхи декабрь уйăхĕ тĕлĕнчипе танлаштарсан республикăра 6,6 процент пулнă. Ку Раççейри тата Атăлçи округĕнчи вăтам кăтартуран пĕчĕкрех. Чăх ашĕ, тăварланă пулă, çăмарта, панулми хакланнă. Хура тулă кĕрпи хакĕ 1,8 хут ӳснĕ. Сутуçăсем çакна Алтайра тухăç сахал пуçтарса илнипе çыхăнтараççĕ иккен. Республика ертӳçи çакăнна килĕшмен. "Эпĕ нумаях пулмасть Алтайран çитрĕм. Унти регион ертӳçи ĕнентернĕ тăрăх – кăçал хура тулăна пĕлтĕрхинчен сахал мар пухса илнĕ. Хак ӳсмелле мар, усламçăсем иртĕхеççĕ. Çĕршывра хура тулă çителĕклĕ", – тенĕ вăл.

**Ирина ПАВЛОВА.**

## ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 26.11 | 27.11 |
|---|---|---|---|
| Температура, $^0$С | 2–4 сехетре | –10 | –10 |
| | 14–16 сехетре | –7 | –7 |
| Юр çăвать | | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 761 | 762 |

ÇЫРĂНТАРУ-2015

ХЫПАР

Вăхăтра çырăнăр – «Хыпарлă» пулăр!

| Индекс | Кăларăмсем | Çырăнтару хакĕ |
|---|---|---|
| 54800 | Хыпар | 732-66 |
| 78353 | Хыпар-шăмат кун | 304-08 |

ХРЕСЧЕН САССИ

| Индекс | Кăларăмсем | Çырăнтару хакĕ |
|---|---|---|
| 54838 | Хресчен сасси | 376-62 |
| 43887 | Хресчен сасси-Кил | 184-08 |

Тăлăх çынпа пĕр «Хресчен сассисĕр» кил.
Ватти-вĕтти, яш-кĕрĕм,
Васка, çырăнса ил!




ИНÇЕТРИ ЯЛ САССИ

# Каялла мар, малаллах

"Çак ялта пуçласа 2006 çулта пулнăччĕ. Кунта пурăнакансем хăнасене çав тери тараватт кĕтсе илни тата хăйсен кил-çуртне хăтлăлатма тăрăшни паянхи кун та тĕлĕнтерет. Хам та ялта çуралса ÿснĕ, анчах пÿртре ăшă туалет тунине пĕрремĕш хут çакăнта курнăччĕ. Сакăр çул каяллах пулнă вăл. Чăннипех тĕлĕнмелле халăх пурăнать кунта", – калас тенине палăртмасăр чăтаймарĕ Çĕрпÿ районĕнчи Ямаш ял тăрăх администрацийĕн специалисчĕ Дина Леонидовна Сергеева.

Унпа пĕрле Анаткаса кĕтĕмĕр. Пĕчĕк ял, çурчĕсене пăхсан ытла пуян тесе калаймăн. Дина Леонидовнăн сăмахĕсем иккĕлентерме тытăнчĕç. "Çурт ăшчиккинче чăннипех те хулари пек хăтлăх хуçаланать-ши?" – çине-çинех ыйтрăм хамран. Пĕрисем патне кĕтĕмĕр – чăннипех çапла иккен. Ял тăрăхĕн депутачĕ Ольга Григорьевна Григорьева та ĕнентерчĕ: шыв пÿртре, ăшши те, сивви те кранран юхать, чылайăшĕн туалет та пур.

Пĕри пÿрт-çурта çĕнĕлĕх кĕртсен тепри унран ÿксе юласшăн мар-мĕн. Вăл та кÿрши пекех тутарма тăрăшать. "Çакă лайăх йăла", – теççĕ Анаткассем. Тата вĕсем çав тери туслă. Ку çĕнĕлĕх мар ĕнтĕ. Республикăри пĕчĕк ялсенчен нумайăшĕ çак енпе палăрса тăрать.

Йыша пĕр тĕвве пуçтарма тăрăшаканĕ – каллех Ольга Григорьевна. "Маттур йĕркелÿçĕ тата пуçаруçă", – тет ун пирки вырăнти администраци çынни. Ял урамĕн çулне Анаткассем кăçал хăйсем йĕркене кĕртме шухăшланă. Килсерен пĕр пин тенкĕ


С. Журавлев сăнÿкерчĕкĕ
*Ольга Григорьева*

пуçтарма килĕшсе татăлнă. Çапла майпа пĕр пысăк машина вак чул туяннă. Ял тăрăхĕ те, паллах, вĕсене пулăшмасăр тăман. Урам çулне тата та типтерлемелле, çавăнпа Анаткассем пуçланă ĕçе çитес çул та тăсасшăн.

Килсерен укçа пуçтарма çăмăл мар. Йĕркеллĕ çул пурне те кирлĕ, анчах укçа патне çитсен турткаланаканни те тупăнать. "Ирĕксĕрлесе туртса илейместĕн вĕт. Параканнисем те, паманнисем те пулнă", – палăртать ялти пуçаруçă. Хыççăнах çитес çул пирки пăшăрханать. "Çурт тăррине витнĕ шифера улăштаракана тупасчĕ. Ăна ватса çул сарнă чух усă курма пулать. Вакă кирпĕч тупăнсан та аван", – тет.

Виçĕм çул Анаткассем ача-пăча площадки йĕркеленĕ. Мĕн кирлине килтен йăтнă. Уява савăнăçлă уçма ялта лавкка (ку ялти пĕртен-пĕр социаллă объект) тытакан çын спонсор пулса пулăшнă. Пĕлтĕр площадка тавра йывăççем лартнă – парк йĕркелесшĕн.

Ялта чăннипе ача-пăча йышлă тесе калаймăн. Хут тăрăх сахал мар çамрăк шутланса тăрать кунта: çур ял таранах, анчах ĕç çукран хулана талпăнаççĕ. Çулла вара ача-пăча ялта. Ольга Григорьевнăнах 8 мăнук. Ялта вĕсене выляма, ытти ачасемпе савăнма вырăн кирлех. Çавăнпа ĕçе пуçăннă та Анаткассем.

Пĕчĕк ялти пĕртен-пĕр урамра пĕлтерÿ хăми вырнаçтарнă, пушартан сыхланмаллине аса илтерекен, вăл тухсан инкекре ыттисене "вăратма" чан çакнă.

Типтерлĕ, тирпейлĕ çынсем пурăнаççĕ кунта. Анчах йĕркелĕх тĕлĕшпе тата та ĕçлемеллине Анаткассем ăнланаççĕ. Наталья Александровна Павловăн акă таса çырмаçатрасене кăна курас килет. "Кирлĕ-кирлĕ мара унта пăрахма чарăнмалла", – тет.

Ĕç çукки пĕтерет. Юрла-юрла тăрăшĕччĕç Анаткассем хăйсен таврашĕнче. Шел, вырăнти "Заря" хуçалăх пăчланнă. Юрать-ха, Чурачăк ялĕнчи фермер патне çÿреме май пур. Лешĕ кĕркунне çĕрулми суйлама çынсене хăех килсе илнĕ, леçсе янă. Ĕçленĕшĕн кунне 450 тенкĕ тÿленĕ.

Апла пулин те çулсерен утăм каялла чакса пыракан ял теейĕмĕн Анаткаса. Сутăнакан пĕр çурт та çук кунта. Кил-çурта никам та пăрахасшăн мар, юсаса çĕнетесшĕн тапаçланать.

"Ял каялла мар, малаллах пăхать", – тет хастар депутат. "Урам пуçĕнчи çул хĕрринче пушă çĕр лаптăкне асăрхарăр-и? Чипер пулсан çитес çуркунне чечек лартса илемлетесшĕн", – хушса хучĕ çийĕнчех. Çакăн хыççăн унăн пĕтĕмлетĕвĕпе епле килĕшмĕн?..

**Ирина НИКИТИНА.**

ХИСЕП

# Ырă ят çичĕ сыпăка çитет

Кашни çын пурнăçĕ пирки роман çырма пулать. Патăрьел районĕнчи Аслă Чементе пурăнакан Василий Капитонов кун-çулне сăнлакан кĕнеке кăсăклă пулмалла. Çитес çул 80 çул тултараканăн шăпи тикĕс килмен. «Эпир курнине мăнуксем те, вĕсен ачисем те ан курччăр», – тет вăл.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине пула миçе шăпăрлан ачалăха пĕлмесĕр çитĕннĕ-ши? Кун пек кăтартăва ниçта та шута илмен, никам та калаймасть. Мирлĕ пурнăçра та вĕсен нушитерчĕ пĕтмен. Вăй питти арçынсем çапăçу хирне выртса юлнăран йывăрлăхсем çамрăксем çине тиеннĕ. Василий Михайлович шăпах вăрçă умĕн, 1935 çулта, çуралнăран чылай асап тÿснĕ. Лаша вырăнне вăкăр кÿлсе Улатăр районне кантăр леçме кайнине, вăрман каснине, çитĕнеймен шăм-шакĕ çĕрĕпе ыратнине паянхи пекех астăвать. Апла пулсан та нăйкăшман, ыратнине те çынна систермен. Шăла çыртнă та чăтнă. Кĕлте турттарнине, пысăк çĕклеме çÿлелле ывăта-ывăта панине Василий Михайлович час-часах халĕ те тĕлĕкре тĕлленет.

«Пĕр вăхăтра колхозра коксагыз ÿстеретчĕç. Унăн тымарне Канаша леçме каяттăмăр. Ăна йышăнаканĕ питĕ тиркесе пăхатчĕ, йăпăр-япăр илместчĕ. Каялла тулли лавпа каяс килмест. Ирĕксĕрех çывăхри кÿлĕ хĕрне кайса çĕнĕрен çăваттăмăр, типиччен кĕтсе лараттăмăр. Кайран тин парса хăвараттăмăр», – аса илет иртнине ĕç ветеранĕ.

Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçланă хыççăн Василий Капитонов ют тăрăхра телей шырас темен, Аслă Чеменех таврăннă. Тÿрех колхозăн тимĕрçĕ лаççинче вăй хума пуçланă. Каярах, виçĕ ача ашшĕ пулнă хыççăн, Шупашкарти вĕрентÿ комбинатĕнче сварщик, газосварщик тата тимĕрçĕ профессисене алла илнĕ. Сунтал умĕнче арçын 40 çула яхăн тăнă. Шăхач, Пашьел тата Чемен ялĕсене пĕрлештерекен «Путь к коммунизму» колхозăн ял хуçалăх машинисене юсанă, сÿре ăсталанă, лашасене таканланă.

Ял халăхне те нумай пулăшнă вăл. Масар çинчи тимĕр хĕрессенчен чылайăшне Василий Михайлович ăсталанă. Кам та пулин ыйтсан сăваплă çак ĕçе халĕ те пурнăçлать.

Пушă вăхăтра вăл вĕлле хурчĕсем патĕнче аппаланать. Вĕсемпе кăсăкланасси Капитоновсен йăхран-йăха куçса пырать. Василий Михайловичăн асламăшĕ утарçă пулнă. Вăл мăнукне яланах хăйпе пĕрле вăрмана илсе çÿренĕ, çак ĕçе явăçтарнă.

Василий Капитонов Аслă Чемен хĕрĕпе, Лидия Филипповнăпа, пĕрлешнĕ. Хисеплĕ мăшăр пилĕк ача çуратса ÿстернĕ. Пурне те аслă пĕлÿ илме пулăшнă.

Ачисем çеç мар, мăнукĕсем те мухтанаççĕ вĕсемпе. Шăкăл-шăкăл калаçса пурăнакансерсем хаçат-журналпа та туслă. Чăваш кăларăмĕсене çырăнса илеççĕ, юратса вулаççĕ.

**Ольга ПАВЛОВА.**
**Патăрьел районĕ.**

КУН ЙĔРКИНЧЕ

## Хута ямалла

Строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕр министрĕн çумĕ Сергей Безруков пĕлтернĕ тăрăх – федерацин "Таса шыв" тĕллевлĕ программипе республикăра 5 объект тăваççĕ. Кăçал республикăн инвестици программине кĕртнĕ çак объектсене вĕçлемелле: Патăрьел, Шăмăршă тата Комсомольски районĕсенче пурăнакансен паха шывпа тивĕçтерекен сооруженисен комплексĕ, Йĕпреçре тата Çĕрпÿре шыва биологи майĕпе тасатмалли сооруженисем хута каймалла, Канаш районĕнчи Шăхасанта шыва тасатакан сооружение юсаса пĕтермелле.

Канашлура пĕлтерĕшлĕ ытти ыйтусене те сÿтсе явнă.

## Китайсемпе, турккăсемпе – туслă çыхăнура

Ноябрĕн 20-мĕшĕнче РФ Президенчĕн Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕн çумĕ ертÿçĕсемпе видеоконференци ирттернĕ. Сăмах Атăл тăрăхĕнчи регионсем Китай Халăх Республикипе экономикăра та гуманитари тытăмĕнче çыхăну тытасси çинчен пынă. Пирĕн республикăран унта Министрсен Кабинетне ертсе пыракан Иван Моторин хутшăннă, отчет тунă. Аса илтерер: республикăра "АгроПарк "Чувашия-Сычуань" пĕрлехи предприяти йĕркелеме килĕшсе татăлнă. Вĕренÿ енĕпе те килĕшÿсем тунă.

Ноябрĕн 22-мĕшĕнче Иван Моторин Турци Республикин делегацийĕпе тĕл пулнă. Пирĕн республика çак халăх çыннисемпе те суту-илÿпе экономика, культурăпа вĕренÿ енĕсемпе çыхăну тытасшăн.

## Купăста фестивальне

Шăматкун Шупашкарта "Николаевский" суту-илÿ комплексĕнче купăста фестивалĕ иртĕ. Уяв хăнисене конкурссемпе савăнтарĕç: купăста турассипе, çак çимĕçрен чи тутлă апат хатĕрлессипе, ăна тĕп-тĕрĕс виçессипе, чи пысăк купăстана палăртассипе, ун çинчен такмаксем калассипе тата ытти те. Уявра купăста кăна мар, унăн чаплă вăрлăхне те сутĕç, лотерея выляттарĕç. Кăсăклă та усăллă иртĕ фестиваль.

**Ирина ПАВЛОВА.**

◆ ҪĔННИ КАЛАҪТАРАТЬ

# «Хĕрӳ» ыйтусен хуравĕ



Административлă йĕркене пăсни ҫинчен калакан Кодекса кĕртнĕ тӳрлетӳсем ноябрĕн 15-мĕшĕнчен вăя кĕчĕҫ. Мĕне шута илмелле малашне водительсемпе ҫуран ҫӳрекенсен? "Российская газета" хаҫат ку тĕлĕшпе вулакансемпе "хĕрӳ лини" ирттернĕ. Ыйтусене Раҫҫей патшалăх автоинспекцийĕн яваплă ҫыннисем хуравланă. Ҫĕннине тĕплĕн ăнлантарса пани пирĕн хаҫат вулаканĕсемшĕн те ытлашши пулмĕ.

**– Правилăсем улшăннă хыҫҫăн халĕ кам мопед рулĕ умне ларма пултарать? Правасăр ларсан явап тыттараҫҫĕ, анчах икĕ кустăрмаллă техникăпа ҫӳреме вĕренме экзаменсем хальлĕхе йышăнмаҫҫĕ-ҫке.**

– Ку тĕлĕшпе ҫыхăнулăх ҫукран пысăк чăрмавсемех сиксе тухмалла мар. Хĕл ҫывхарать, мопедсемпе ҫӳреме чарăнаҫҫĕ. Нумайăшĕ вĕсене гаража кĕртсе лартнă та ĕнтĕ. Саккунпа килĕшӳллĕн ҫак транспорт хатĕрĕпе кирек мĕнле категори илнĕ водитель те ҫӳреме пултарать. Апла нумайăшĕ мопед ҫине ҫăмăллăнах ларса ҫула тухма пултарать. Кун пеккисем чылайăн. Камăн нимĕнле права та ҫук, вĕсен ирĕксĕрех вĕренсе экзамен тытма тивет.

## Тавăрса парĕҫ, анчах ыйтнине пурнăҫласан

**– Водителĕн правине туртса илнĕ тапхăр вĕҫленнĕ. Ҫул-йĕр правилисене пĕлнине ҫирĕплетме унăн каллех экзамен тытмалла. Ҫак йĕрке мĕнлерех пулса пырать?**

– Кирлĕ, ҫивĕч ыйту. Анчах та ку тĕлĕшпе палăртнă нормăсем пĕлтĕрхи сентябрь уйăхĕнчех вăя кĕнĕ. Вĕсемпе килĕшӳллĕн правана вăхăтлăх туртса илнĕ водителе удостоверение каялла тавăрса памалли йĕркене РФ правительстви ҫирĕплетет. Паянхи кун постановлени проектне хатĕрлесе ҫитернĕ. Правительствăра ҫирĕплетнĕ хыҫҫăн часах кун ҫути курасса шанатпăр. Ун чухне удостоверение водителе унта палăртнă йĕркепе тавăрса парĕҫ.

**– Правана каялла илес тесен экзамен тытнисĕр пуҫне мĕнпур парăма та тӳлесе татмалла.**

– Ноябрĕн 15-мĕшĕнче вăя кĕнĕ ҫĕнĕ саккун нормисемпе ҫапла тумалла. Паянхи кун, шел те, нумайăшĕ штрафа хăйсен ирĕкĕпе тӳлесе татма васкамасть. Тепĕр чухне пĕр ҫыннăнах питĕ пысăк сумма пуҫтарăнать. Водителĕн правине пĕр уйăхлăха туртса илнĕ пултăр. Ăна каялла илсен вăл штрафĕ ҫинчен манса малашне те ирĕклĕн чупать. Ҫавăнпа кĕртнĕ ҫак нормăна. Ку – правана каялла илмелли условисенчен пĕри. Ҫавăн пекех правине туртса илнĕ водителĕн ҫул-йĕр правилисене пĕлнине ĕнентермелле. Правана руль умĕнче ӳсĕрле ларнăшăн е больницăна тĕрĕслеттерме кайманшăн туртса илнĕ водительсен медучрежденире хăйсен сывлăхне тĕрĕслеттермелле. Тен, вăл транспортпа ҫӳреме пултараймасть?

**– Урăхла каласан, ĕлĕкхи пек медсправка тутармалла-и?**

– Паллах. Тата ҫĕнĕ саккунпа правана туртса илнĕ водительсен хăйсен патшалăх умĕнчи парăм ҫуккине ĕнентермелле. Ăнлантаратăп: пĕлтĕр вăя кĕнĕ саккун статйине (КоАПăн 12.8 статйи) руль умĕнче ӳсĕр пулнă водителĕн икĕ тĕрлĕ явап тытма тивет. Правине туртса илнисĕр пуҫне штраф тӳлесе татмалла. Унăн сумми пĕчĕк мар – 30 пин тенкĕ. Йĕркене иккĕмĕш хут пăссан – 50 пин. Енчен те правана каялла илнĕ чухне обязательнăй майпа штраф тӳлеттермелле туман пулсан водитель пĕр явап кăна тытĕччĕ: правине илсе малалла чуптарĕччĕ. Халĕ мĕнпур штрафа тӳлесе татмасăр удостоверение алла илеймĕн.

## Машина – саклатра

**– Юстици министерстви ӳсĕр водителе машинăна штраф виҫи чухлĕ саклатпа тивĕҫтерсен кăна тавăрса пама сĕнет. Ҫакă витĕмлĕ пулĕ-и?**

– Кунта лару-тăру акă мĕнлерех. Юстици министерстви саккун проектне ҫул-йĕр ҫинчи хăрушсăрлăх комиссийĕн хушăвне пурнăҫласа хатĕрленĕ. Ӳсĕр водитель ҫул ҫине ан тухтăр тесе. Эпир ӳсĕр водителĕн транспорт хатĕрне тытса чаратпăр. Сăлтавĕ пĕтсен, калăпăр, йĕркене пăсакан тепĕр кунне урă ҫитсен е правине машинăна ҫӳретме пултаракан ҫынна парсан, транспорт хатĕрне каялла илсе каять. Юстици министерствин сĕнĕвĕпе водитель суд палăртнă штрафа тӳлесен е суд пуличчен саклат укҫипе тивĕҫтерсен кăна машинине илме пултарать. Йĕркене пăснă самантра водителĕн ҫумра пысăк укҫа пуласси иккĕлентерет. Хальлĕхе ку сĕнӳ кăна. Хăҫан пурнăҫа кĕресси паллă мар, анчах хăҫан та пулин ҫав вăхăт ҫитетех пулĕ.

**– Сирĕн шухăшпа ҫак сĕнӳсем кирлĕ пек-и?**

– Ку саккуна эпир Юстици министерствипе пĕрле хатĕрленĕ. Унăн проектĕнче парăмри водительсене хытарма та палăртнă. Тĕслĕхрен, водитель хăйĕн штрафĕсене тӳлемесен юридици пĕлтерĕшлĕ ĕҫсем тума пултараймасть. Пирĕн сĕнӳпе, калăпăр, вăл машинине регистрацилеме килет, анчах парăм пулсан патшалăх умĕнчи штрафсене тӳлесе татмасăр ăна регистрацилемеҫҫĕ.

**– Регистраци уйрăмĕсенче халĕ те ҫапла пулса пырать мар-и? Водителе штрафсене тĕллесе кăтартаҫҫĕ те тӳлеме яраҫҫĕ, ун хыҫҫăн ҫеҫ учета тăрататпăр теҫҫĕ.**

– Чăнахах ҫапла пулсан ҫакă тĕрĕс мар паллах. Кирек епле лару-тăрура та регистрацилеме хирĕҫлемелле мар. Анчах та пирĕн полномочисем пур, 20.25 статьяпа водителе явап тыттарма пултаратпăр. Ҫапла тăватпăр та. Урăхла каласан асăннă статьяпа ĕҫ пуҫарса ҫынна пирĕн суда илсе ҫитермелле. Маллахи ĕҫ-пуҫ суд мĕнле йышăну тунинчен килет.

**– 20.25-мĕш статьяпа штрафа икĕ хут пысăкрах тӳлемелле.**

– Тата ирĕксĕрлесе ĕҫлеттереҫҫĕ е 15 талăклăха арестлеҫҫĕ.

**– Ноябрĕн 15-мĕшĕнчен машинăна ҫӳретме чарнă чухне регистраци номерне илмелле мар.**

– Ҫапла. 15-мĕш число хыҫҫăн ҫын регистраци номерне ыйтсассăн ăна пĕр сăмахсăр тавăрса памалла.

**– Водитель машинăна чарнипе ҫыхăннă ҫитменлĕхе пĕтермесен те-и?**

– Ăна тĕрĕслесси ҫук. Номере хуҫине памалла.

## Йăл кулăр, сире ӳкереҫҫĕ

**– Халĕ пунеттейсем вырăнне видеоӳкеревпе усă курма юрать. Ҫав видеоматериал тӳрлетме май ҫукки пулмалла-и?**

– Пĕлтерĕшлĕ мар. Видеоматериала сударья йышăнать. Ĕненет-и ăна е ҫук -и – унăн ирĕкĕ.

**– Анчах видеоӳкерӳре ҫыннăн питне хĕрлĕ тĕс ҫапнине, ҫăварĕнчен эрех шăрши тухнине кураймастăн-ҫке.**

– Курма кирлĕ те мар. Ӳкерекен тата ӳкернине ăнлантаракан ҫын хăй мĕнле ĕҫ туни ҫинчен калать. Мĕн сăлтавпа-и? Мĕншĕн тесен тытса чарнă ҫыннăн куҫĕ хĕрелнине курать. Калаҫăвне ăнланмалла мар. Ҫăварĕнчен эрех шăрши тапать. Пунеттейсем те вĕт ҫыннăн куҫне пырса тĕрĕслемеҫҫĕ, вăл мĕн хăтланнине кăна сăнаҫҫĕ.

**– Калăпăр, йĕркене пăснă водителе ӳкереҫҫĕ, кайран камерăна сӳнтереҫҫĕ. Пĕр-пĕр пакет пăрахаҫҫĕ те камерăна ҫĕнĕрен яраҫҫĕ.**

– Пунеттейсем пур чухне те капла хăтланма пулать. Калăпăр, инспекторсенчен пĕри ĕҫлет. Иккĕмĕшĕ пунеттее ыйту парать. Лешĕ ҫаврăнать, ҫак хушăра тепри мĕн те пулин пăрахать. Темĕнле те фантазилеме пулать. Ҫакă ниме те пĕлтермест. Ахаль ҫын е должноҫри ҫын йĕркене чăннипех пăсни вара урăх ĕҫ.

**– Водитель ҫавах пунеттейсене чĕнес тесен?**

– Кăна должноҫри ҫын татса парать.

**– Халĕ фото-видеофиксаци хыҫҫăн 15 кун хушшинче постановлени хатĕрлемелле.**

– Ку срок малтан та пулнă, ăна саккунра ҫырман кăна. Ăна иккĕлле ăнланма май пулнă. Пирĕн ĕҫченсенчен чылайăшĕ постановление 15 кунра хатĕрлесе ҫитернĕ. Теприсем икĕ уйăхра.

**– Анчах икĕ уйăхран ирттермесĕр тесшĕн-и? "Телей ҫырăвĕсем" 2-3 уйăхран та ҫитетчĕҫ вĕт.**

– Ку ыйтупа почтăна тухмалла. Постановление хăҫан янине реестр тăрăх пăхмалла.

**– Ҫыру кая юлса ҫитни постановление жалоба парас вăхăта витĕм кӳмест-и?**

– Ҫук. Жалоба памалли 10 кун ҫырăва илнĕ вăхăтран пуҫланать. Ҫыру хăш кун ҫитнине конверт ҫинче палăртнă.

**– Йĕркене пăснă тĕслĕхе халĕ эсир ҫĕнĕлле квалификацилеме пултаратăр. Ҫапла-и?**

– Йĕркене пăснин тĕслĕхĕпе водитель килĕшмесен ĕҫе ҫĕнĕрен пăхса тухма пултаратпăр. Тĕслĕхрен, инспектор шухăшĕпе водитель правилăна пăсса транспорт хирĕҫ килекен ҫулпа пынă. Водитель: "Апла мар. Эпĕ йĕркене пăсса сулахаялла пăрăннă", – тет. Йĕркене пăснă тĕслĕх пулнă, анчах инспектор палăртнă йышши мар. Водитель хăйĕн сăмахне ĕнентернĕ пулсан малтанхи ҫулсенче ĕҫе хупнă, ҫĕнни пуҫламан. Халĕ инспектор йĕркене пăснине урăх статьяпа квалификацилеме пултарать.

◆ ТИМСĔРЛĔХ

## Тăватă ҫынна таптанă

Иртнĕ канмалли кунсенче кăна республикăри ҫулсем ҫинче 81 авари пулнă. Эрнере вара ҫак кăтарту 250 ҫывхарнă.

Тĕслĕхрен, Комсомольски районĕнчи ҫул ҫинче "Лада Калина" автомашина рульне ӳсĕрле тытса пынă водитель транспорчĕпе кювета чăмнă. Машинăра ларса пынă 33 ҫулти хĕрарăмăн пурнăҫĕ тӳрех татăлнă. Тепĕр пассажирпа водителе больницăна ăсатнă.

Иртнĕ эрнери пĕр ир Ҫĕмĕрлере ятарлă вырăнта ҫул урлă каҫнă чухне арҫынна ВАЗ-2109 машина ҫапса хăварнă. Суранланнă ҫынна больницăна ăсатнă. Ҫав кунах Патăрьел районĕнче тавралăха каҫ сĕмĕ ҫапсан ҫуран пынă ҫынна автомашина ҫапса хăварнă. Водитель чарăнман, хăвăртрах куҫран ҫухалма васканă. Сĕнтĕрвăрри районĕнче те каҫхине ҫула тухнă арҫын машина айне пулнă. Вăл йĕркене пăхăнмасăр ҫул урлă ятарлă вырăнта каҫман. Етĕрне районĕнче автомашина водителĕ каҫхи тĕттĕмре асăрхамасăр 81 ҫулти ватăна таптанă. Ĕҫ-пуҫ каллех больницăпа вĕҫленнĕ.

Муркаш районĕнчи ҫул ҫинче "Хундай Солярис" водителĕ тимĕр карта юпи ҫине пырса тăрăннă. Вăйлă тăрăнтарнăран машина транспорт хирĕҫ килекен ҫул ҫине сирпĕнсе тухнă, тепĕр машинăпа ҫапăннă. Лешĕ кювета кĕрсе ӳкнĕ. Унăн водителĕпе 3 пассажира больницăна леҫме тивнĕ.

## Рейса тухас умĕн асăрхан

Предприятисемпе организацисен автотранспорчĕпе ҫӳрекен водительсен айăпĕпе ҫулталăк пуҫланнăранпа ҫул ҫинче 146 инкек пулнă, вĕсенче 13 ҫын пурнăҫран вăхăтсăр уйрăлнă, 185-ĕшĕ аманнă.

Пассажирсем тата тĕрлĕ тиев турттаракан предпринимательсен те тимлĕ пулмалла. Вĕсем те сахал мар авари тăваҫҫĕ. Ноябрĕн 19-28-мĕшĕсенче республикăра "Транспортник" операции иртет. Ҫул-йĕр ҫинчи хăрушсăрлăхшăн тăрăшакансем транспорт юсавлăхне автобуссем чарăнакан вырăнсенче тĕрĕслеҫҫĕ. Организацисен транспорт хатĕрне пăхнă чухне ҫула тухма ирĕк паракан документ пуррине, рейса кăларас умĕн водительсен сывлăхне, машина юсавлăхне тĕрĕслениne тата ыттине шута илеҫҫĕ.

## Пĕр миллион ытла ҫухататпăр

Пĕрлештернĕ нацисен организацийĕн кăтартăвĕ тăрăх – ҫул ҫинчи инкеке пула тĕнчипе ҫулсерен 1 миллион та 200 пин ҫын пурнăҫпа сывпуллашать. Унсăр пуҫне 20-50 миллион ҫын таран суранланать. Пурнăҫран уйрăлнисенчен ҫурри ытларахăшĕ – 15-44 ҫулсенчи ҫамрăкпа вăйпитти.

Сывлăх сыхлавĕн пĕтĕм тĕнчери организацийĕ 2020 ҫулта ҫул ҫинчи аварисем ҫын вилнин е аманнин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри пуласса палăртать.

## Сывалччăр, ҫулпа тĕрĕс пычччăр

Пĕтĕм тĕнчери ачасен кунĕнче (ноябрĕн 20-мĕшĕнче) Шупашкарти ҫул-йĕр инспекторĕсем хулари ача-пăча поликлиникине ҫитнĕ. Пĕчĕкскерсене больницăра кичем ан пултăр тесе конфетпа хăналанă, ятарлă значоксем парнеленĕ. Тата, паллах, ҫул урлă тĕрĕс каҫмалли правилăсем ҫинчен аса илтернĕ. Кашни ача тĕттĕмре ҫутатакан паллă илнĕ. Унпа чухне водитель ҫуран пыракана инҫетренех асăрхĕ.

Страницăна Ирина НИКИТИНА хатĕрленĕ.

Кăларăм Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе тухса тăрать.

Ĕмĕр сакки

# Манăн чунăм таса

**Шурă кирпĕчрен хăпартнă тăпăл-тăпăл çурт умĕнчи палисадникре хĕрлĕ георгинсем куçа йăмăхтарса ларaççĕ. Сивĕ кĕр те вĕсене сиенлеймен-ха. Юнашар кĕл чечекĕ çын çӳллĕш ӳссе кайнă. Çеçкине тахçанах тăкнă ĕнтĕ. Хĕл енне ăна çĕр çумне выртарса витсе хураççĕ.**


С. Журавлев сăнӳкерчĕкĕ

## Газ, такăр çул, пĕве...

22 çул ытла ертӳçĕ лавне туртнă хыççăн халĕ савăнсах хушма хуçалăхра вăй хурать Иван Никифоров. «Ĕççĕр ларма пултараймастăп эпĕ», – терĕ хисеплĕ ĕç ветеранĕ.

Унăн ачалăхĕ вăрçă çулĕсенче иртнĕ. Вăрçă пуçланнă çул ашшĕ вилсе кайнă. Иван Тури Çĕрпӳкассинчи пуçламăш шкула çӳреме пуçланă. Выçлăх алхасма пуçласан вĕренме пăрахсах амăшĕпе ялсем тăрăх ыйткаласа çӳрени те пулнă. Тăхăр çултах çăпата туса ăна Выл пасарĕнче сутнă, кĕнеке-тетрадь туяннă. Юман çăпанĕнчен чернил хатĕрленĕ. Пĕрремĕш Хурашаш шкулне пилĕк çухрăма çуран утнине тата ăçтан манăн? Хĕлле тул çутăлса çитиччен çула тухма тивнипе ачапăча кĕлпе краççын хутăшĕ ярса çутнă консерв банкине йăтса пынă. Çакă умри çула çутатма кăна мар, кашкăр кашамансене хăратма та пулăшнă. «Вăрçă çулĕсенче ĕрчесех кайнăччĕ тискер чĕрчунсем. Çынсенчен те хăрамастчĕç, пирĕн умранах чупса иртетчĕç», – аса илчĕ ватă.

Вăтам пĕлӳ илес килни ăна Штанашри шкула илсе çитернĕ. Ун чухне вĕреннĕшĕн çулталăкне 150 тенкĕ тӳлеттернĕ. Вăл вăхăтра самай пысăк укçа.

– Анне Штанаша апат-çимĕç тултарса пыратчĕ. Эпĕ выçă ларасран йĕпе-сапаллă, сивĕ çанталăка пăхмасăр 12 çухрăм утнă вăл. Мана вĕрентсе кăларассишĕн вăй-халне, укçине шеллемен. Унăн ĕмĕтне шанăça кăларассишĕн кайран аслă шкул та пĕтертĕм.

Иван Никифоров колхозник, комсомол ĕçченĕ, «Путь Ильича» колхоз ертӳçи, Тури Çĕрпӳкасси ял Совет ĕçтăвком председателĕ, колхозри партком секретарĕ пулнă. Тӳрĕ кăмăллă, хастар çамрăк ыттисене те хăй хыççăн туртнă.

– 1961 çулта, мана, 27 çулти çамрăка, «Путь Ильича» колхоза ертсе пыма хушрĕç. Халăхпа малтанхи хут çур аки ирттерме тиврĕ. Пăшăрханнипе çĕрĕ-çĕрĕпе çывăраймастăм, уй-хиртен кĕме пĕлмен. Хальхи пек техника çук вăл вăхăтра. Ака уйăхĕнче ака-сухана тухрăмăр та çу пуçланнă тĕле уй-хир ĕççене йăлтах вĕçлерĕмĕр. Çав çул тухăç та ăнса пулчĕ. Ун чухне çĕр ĕçченĕсене шалу паман. Эпир вара пĕр ĕç кунĕ пуçне 20 пус хушса тӳлерĕмĕр. Удобрени вырăнне шурлăхлă вырăнсенчен торф кăларса ăна хире турттартăмăр. Вăрман хăртса тырă акма уй хатĕрлерĕмĕр. Кĕтӳ кĕтме вырăн сахалланса юлнăшăн çынсем кăмăлсăрланчĕç паллах. Колхозра 4 гектар çинче хăмла лартса хăвартăмăр. «Симĕс ылтăнран» пысăк тупăш илме тытăнтăмăр, – аса илет Иван Никифорович.

Ун хыççăн ăна «Марксист», «Свобода», «Аккозинское» хуçалăхсене те ертсе пыма тӳр килнĕ. Юлса пыракан предприятисене туртса кăларса республика шайне çĕклеме пултарнă вăл. Кирек ăçта та хăй хыççăн ырă йĕр хăварнă. Вăл тăрăшнипе çăкăр завочĕ, çĕвĕ цехĕ, сĕтçу фермисем, мастерскойсем, хваттерсем хута кайнă, асфальт çулсем сарнă.

– Рынок тапхăрĕнчен чылай хуçалăх ишсе тухаймарĕ. Эсир вара йывăр вăхăтра та укçатенкĕ тупма пултарнă.

– Укçа енчен йывăрланма пуçласан хамăр продукцие вырнаçтарма çĕнĕ çулсем шырама пуçларăмăр. Ăна Казахстан таранах ăсатнă. Колхозниксене вăрман касма, ытти хулана заводсене ĕçлеме янă. Уншăн хуçалăха техника, йывăç тата ытти тавар килнĕ. Вĕсене сутса укçа тăваттăмăр. Бартерпа хуçалăх валли строительство материалĕсем, саппас пайĕсем улăштарса илеттĕмĕр.

– Эсир чылай яла газ, асфальт çул çитернĕ. Анчах хăвăр пурăнакан вырăна халĕ те такăр çул çитеймен-ха.

– Тури Çĕрпӳкассипе Анат Çĕрпӳкасси ялĕсене асфальт çулпа çыхăнтараймаишĕн халĕ те кулянатăп. Çул тума техника тупса калаçса та татăлтăм. Вĕсем пирĕн тăрăхра ĕçе тытăннăччĕ ĕнтĕ. Икĕ ял хушшипе тăприне те хăпартса тухрĕç, анчах хăш-пĕр карма çăвар ирĕк паманнипе ĕçе вĕçлеймерĕм. Халăх та вĕсен сăмахĕ хыççăн кайса урам хушшине тракторпа çĕмĕрме килĕшмерĕ. Паян кунччченех ялта пурăнакансем пылчăк çăрса утаççĕ. Хăйсен йăнăшне тинех ăнланса илчĕç вĕсем, анчах чавса çывăх та çыртаймăн.

Иван Никифоров хăй ĕмĕрĕнче 20 ытла пĕве тутарнă. Çырма-çатрасен, пĕвесемпе аслă çулсен хĕррипе, урамсене йывăç-тĕм ларттарнă. Халĕ вĕсем вăрман пекех кашласа ларaççĕ. Ырă пуçарăва ача-пăчана та явăçтарнă.

– Пĕрре района кайма тухрăм. Вăрман хуçалăхĕн ĕçченĕсем хунавĕсене те лартса пĕтереймен, кĕтӳçсем вара вĕсем хыççăнах выльăх-чĕрлĕх кĕртсе янă. Тарăхсах кайрăм. Машинăна чарсах кĕтӳçсем патне чупрăм. Тытăççах ӳкрĕмĕр, анчах ешĕл хунавсене пĕтерме памарăм.

Вăл ертсе пынă «Свобода», «Аккозинское» хуçалăхсем 90-мĕш çулсенче ĕç кăтартăвĕсемпе Чăваш Ен Президентĕнчен дипломсемпе виçĕ трактор илме тивĕçнĕ. Ĕçчен çыннăн кăкăрне икĕ медаль илемлетет.

– Кирек ăçта ĕçлесен те шанăça тӳрре кăларма тăрăшнă. Çĕршыв, халăх интересĕ яланах малти вырăнта тăнă. Ертӳçĕ пуканне хамăн ырлăхшăн, пайта курассишĕн йышăнман. Çитĕнӳпе пĕрлех такăнасси те пулнă. Çапах утса тухнă çула пĕтĕмлетсе çакна калăттăм: манăн чунăм ыттисен умĕнче таса, – пĕтĕмлетрĕ Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Иван Никифоров.

## Çемье тĕрекĕ

– Çемьере килĕшӳ те тату пулмасан çакăн пек çитĕнӳсем тунă пулăттăм-ши, калама йывăр, – сăмахлать ĕç ветеранĕ. – Килтен ирирех тухса кайнă та çĕрле çаврăнса çитнĕ. Ачасем эпĕ тухса кайнă чухне çывăрса юлатчĕç, таврăннă çĕре каллех çывăратчĕç. Кил-çурт, хушма хуçалăх, Зоя Алексеевна мăшăрăм çине тиеннĕ. Мĕнле ĕлкĕрсе пынăши вăл? – тет кил хуçи юнашар ларакан арăмĕ çине ăшшăн пăхса. Пĕлтĕр Никифоровсем ылтăн туйне паллă тунă. Виçĕ ывăл пăхса ӳстернĕ вĕсем. Шел, икĕ ывăлĕн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă. Аслă ывăлĕ, Володя, Чулхулари юхан-шыв училищинче вĕреннĕскер, 19 çул тултарнă кун, сарăмсăр ӳксе вилнĕ. Кĕçĕнни, Сергей, Мускаври аслă шкултан, аспирантурăран вĕренсе тухнă. Унăн та кунçулĕ вăрăм пулман, 40 çултан иртсен кĕтмен чире пула сасартăк пурнăçран уйрăлнă. Паян ашшĕ-амăшĕн тĕрекĕ – Николай тата мăнукĕсем. Строитель ĕçне алла илнĕскер Шупашкарта тымар янă. Çапах ватăсене манмасть, пулăшсах тăрать.

– Иксĕре кăна кичем мар-им? – ыйтатăп вĕсенчен.

– Çук, хушма хуçалăхра тăрмашсах вăхăт иртсе каять. Ĕне, сысна, чăх-чĕп усратпăр. Çулла пахча ĕçĕ хушăнать.

И. Никифоров сакăр теçеткерен иртсен те общество ĕçне пăрахман: Тури Çĕрпӳкасси ял совечĕн депутачĕ, районти АПК ветеранĕсен ертӳçин çумĕ вăл. Никифоровсен пахчи пуян. Иçĕм çырли, панулми, сырлан йывăçĕсем ӳсеççĕ, хăмла çырли, хурлăхан тĕмĕсем сарăхса ларaççĕ. Кунта та çирĕп, типтерлĕ хуçа пурри тӳрех курăнать. Кашни япала хăй вырăнĕнче. Пахча çимĕç, улма-çырла ăнса пулнă вĕсен. Акă кавăн самăр сысна çури пек сарăлса выртать. Ăна пĕччен вăй çитерейменнипе йăран çинчен иккĕн çĕклесе кĕнĕ.

Тараватлă кил хуçисемпе сывпуллашса çула тухатпăр. Пирĕнтен Иван Никифоров та юлмарĕ. Шупашкарта больницăра сывлăхне тĕрĕслеттересшĕн-мĕн: «Хамăра пăхса асăрхаса тăмасан чир-чĕр урараn çапса ӳкерет».

**Лариса НИКИТИНА.**

ШУТ-ХИСЕП

## 2014 çулхи 9 уйăхри выльăх-чĕрлĕх отраслĕнчи кăтартусем

(мĕнпур категорири хуçалăхра)

**Ял хуçалăх организацийĕсенчи ĕнесен продуктивлăхĕ**

(хушма хуçалăхсенне шута илмесĕр)




**Выльăх-чĕрлĕх продукцине туса илни**

(2013 çулхи çав тапхăртипе танлаштарсан, процентпа)




**2013 çулхи выльăх-чĕрлĕх продукцийĕн тытăмĕ**

(выльăх-чĕрлĕх продукцийĕнчен процентпа)




**Выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк шучĕ** (2014 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне, пин пуç)





# Карач

Куславкка районĕнчи Карач ял тăрăхне 9 ял кĕрет: Илепар, Якунькка, Карач, Çатрăк, Кĕçĕн Карач, Паланкасси, Тулпай, Мĕниçырми, Минкĕш. Ку ялсем ĕлĕкрен хăйсен алăсталăхĕпе палăрса тăнă. Кĕçĕн Карачра столярсемпе токарьсен ятарлă артелĕ пулнă. Çатрăкра тата Карачра йывăçран тĕрлĕ япала касса кăларакан ăстасем пурăннă. Вĕсем чаплă çуртсем ăсталанă. Карач пасарне таçтан та сутă тума çӳренĕ. Тутарсем, çармăссем, чăвашсем саркаланнă унта.

1952-53 çулсенче Карачри вăтам шкулта 622 ача вĕреннĕ. Шкула 22 ялтан ăс пухма çӳренĕ. 1949 çулта Карач ял администрацийĕн ялĕсенче пĕтĕмпе 2583 çын пурăннă, 531 кил хуçалăхĕ пулнă.

Халĕ лару-тăру палăрмаллах улшăннă. Паян 436 кил хуçалăхĕ шутланать, 107 кил пушă. Ял халăхĕ 900 çынна яхăн чакнă. 50 çул каяллахинчен виçĕ хут сахалрах. Шкулта 118 ача вĕренет.

**Сергей ЖУРАВЛЕВ сăнӳкерчĕкĕсем.**



Карачри чиркӳ настоятелĕ Николай атте



Карач ял тăрăхĕн культура çурчĕн пуçлăхĕ Любовь Краскова



В.Н. Семенов хресчен (фермер) хуçалăхĕн водителĕ Александр Маркиданов



Культура çуртне тирпейлесе тăракан Татьяна Тебакова



Культура çурчĕн организаторĕ Наталия Краснова



Çыхăну уйрăмĕн пуçлăхĕ Светлана Степанова



В.Н. Семенов хресчен (фермер) хуçалăхĕн инженерĕ Иван Семенов

## ЫЙТУ – ХУРАВ

### Хисеплĕ ят та параççĕ

**? Донорсене çăмăллăхпа тивĕçтереççĕ-и?**

**Василий ЕВДОКИМОВ.**
**Вăрнар районĕ.**

РФ Ĕç Кодексĕн 186-мĕш статйипе килĕшӳллĕн юн е унăн компонентне панă кун донора ĕçрен хăтарма, çав вăхăтрах пĕр кун шалăвне упраса хăварма ирĕк пур. Енчен те донор çак кун ĕçлерĕ пулсан хăйĕн кăмăлĕ тăрăх урăх кун канма пултарать.

Юн панă кун донор тӳлевсĕр апатланать.

Тăтăш юн паракан донорсене ĕç тата вĕренӳ вырăнĕнчен санаторипе курорта кайма путевкăпа чи малтан тивĕçтермелле.

Федерацин ятарлă саккунĕпе килĕшӳллĕн 40 е ытларах хут юн, çавăн пекех 60 е ытларах плазма панă граждансене «Раççейĕн хисеплĕ донорĕ» ята параççĕ. Вĕсем патшалăх тата муниципалитет сывлăх сыхлавĕн организацийĕсенче медицина пулăшăвне тӳлевсĕр илме пултараççĕ. Саккун тăрăх санаторипе курорта кайма путевкăпа тивĕçтермелле, çулсеренех тӳлевлĕ отпуска ямалла, кашни çул укçа парса хавхалантармалла.

Раççей тĕп хулинче пурăнакансем «Мускав хулин хисеплĕ донорĕ» ята тивĕçме пултараççĕ. Паллах, пурте мар: 20 е ытларах хут – юн, 30 е ытларах хут плазма панисем анчах.

### Амăшĕн капиталĕпе

**? Ачана уйрăм çын тытса тăракан садике вырнаçтарасшăн. Кун пек чухне амăшĕн капиталĕпе усă курма юрать-ши?**

**Галина ПЛАТОНОВА. Патăрьел ялĕ.**

Юрать. Халĕ амăшĕн капиталĕпе ача сачĕшĕн тӳлеме ирĕк панă. Çав вăхăтрах уйрăм çын тытса тăракан садикшĕн те. Патшалăх пулăшăвне эсир ача виçĕ çул тултарсан çеç тивĕçме пултаратăр. Амăшĕн укçипе аслă ачасемшĕн те, кĕçĕннисемшĕн те тӳлеме пулать. Малтанах тӳлев виçине тата вăхăтне кăтартса ача сачĕпе килĕшӳ тумалла. Укçана счет çине куçарма реквизитсене палăртмалла. Каярахпа вырăнти Пенси фондне заявлени çырмалла, килĕшĕве пĕрле памалла. Пĕрремĕш тӳлев заявлени çырнă хыççăн икĕ уйăхран çитет, ытти вара – килĕшӳре палăртнă вăхăтра.

Амăшĕн капиталĕпе çавăн пекех пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма, ачасене вĕрентме тата амăшĕн пулас пенсине ӳстермешкĕн усă курма юрать.

## АХ, АНЧАХ...

### Саккуна пăхăнмасан...

Елчĕк район прокуратури çĕр çинчен калакан саккунсене еплерех пăхăннине тĕрĕсленĕ. Ял хуçалăхĕпе ĕçлекен вунă предприятипе организаци, çавăн пекех сакăр хресчен (фермер) хуçалăхĕ граждансен харпăрлăхĕпе – пай çĕрĕсемпе – тӳлевлĕн усă кураççĕ. Анчах та асăннă çĕр лаптăкĕсене арендăна илсе усă курни çинчен килĕшӳ туман. Çавна май ял хуçалăх предприятийĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсен ертӳçисене административлă йĕркене пăснăшăн ĕç пуçарнă, айăплисене штрафланă.

Вунă çынна дисциплинарлă яваплăх çирĕплетнĕ, усă куракан çĕр участокĕсене саккунлă майпа çырса йĕркелеме тытăннă.

### Вăйăран – вăкăр

Çĕрпӳ район сучĕн асăннă тăрăхра пурăнакан 16 çулти çамрăк тĕлĕшпе палăртнă приговорĕ вăя кĕнĕ. Ăна УК 264 статйин 3-мĕш пайĕпе айăпланă – çул-йĕр правилине пăснă май çынна асăрханмасăр вĕлернĕшĕн. Çамрăка пĕр çуллăха условнăй майпа ирĕклĕхсĕр хăварнă тата çулталăк хушши транспортпа çӳреме юраманнине палăртнă.

Суд çирĕплетнĕ тăрăх – Иванов (водитель удостоверенийĕсĕр) кăçалхи июнĕн 12-мĕшĕнче çĕрле Çĕрпӳ районĕнчи Елаш ялĕ çывăхĕнчи çулпа регистрацилемен «ВАЗ-2101» автомобильпе вĕçтерсе пынă. Çитменнине салонра пассажирсем те пулнă. Вĕсем пиçиххипе çыхăнман, транспорт пынă вăхăтрах салонран тухкаланă. Çавна май çула çитмен пĕр пассажир тухса ӳкнĕ, вилмеллех аманнă.

Иванов хăйĕн айăпне пĕтĕмпех йышăнман. Çавна май суд приговорне хирĕçлесе çырнă. ЧР Аслă сучĕн суд коллегийĕ вара приговора çаплипех хăварнă.

Сăмах май, айăпланакан инкек пуличчен пĕр-икĕ кун маларах хăйĕн кĕсье телефонне çак автомобильпе улăштарнă.

**Валентина МАКСИМОВА.**

## Саккун пуриншĕн те тан

Саваламан сакран хулăн укçа та, пуçлăх пуканĕ те хăтарса хăвараймасть иккен. Нумаях пулмасть тÿресем Çĕрпÿ район пуçлăхĕн çумĕнче ĕçленĕ Денис Николаев, çавăн пекех «Все для дома», «СТМ» пĕрлешÿсен пуçлăхĕсем Константин Семеновпа Иван Федоров тĕлĕшпе йышăннă уголовнăй ĕçе пăхса тухнă. Мĕнпе айăпа кĕнĕ-ха вĕсем?

Тĕпчев палăртнă тăрăх – 2011 çулта «Все для дома» пĕрлешÿ Çĕрпÿри Терешкова урамĕнчи 16, 18, 20-мĕш çуртсене тĕпрен юсаса çĕнетме уçă конкурса хутшăннă та çăмăллăнах выляса илнĕ. Унтан предприяти директорĕ Константин Семенов юсав ĕçĕсене пурнăçлама «СТМ» пĕрлешĕвĕн пуçлăхĕпе Иван Федоровпа килĕшÿ тунă.

Юсав вĕçленсен заказчик («УК «Все для дома» пĕрлешÿ) тата подрядчик («СТМ» пĕрлешÿ) ĕçе йышăнма актсене Çĕрпÿ район пуçлăхĕн пĕрремĕш çумне Д. Николаева тăратнă. Документсенче юсав ĕçне 10 656 пин тенке хакланă. Тĕрĕссипе вара ĕç-хĕле йĕркеллĕ пурнăçлайман та. Çакна виçĕ пуçлăх аван пĕлнĕ-ха, анчах янтă укçа илес килни ултав çулĕ çине тăратнă. Строительствăпа техника экспертизи çÿлерех асăннă çуртсенче юсав ĕçĕсене 8 390 пин тенкĕлĕх çеç тунине кăтартнă. Апла 2 265 пин тенкине ÿстерсе çырнă.

Унсăр пуçне право органĕ Çĕрпÿ район пуçлăхĕн çумне Д. Николаева служба вырăнĕпе иртĕхсе усă курнăшăн та айăпланă. «2002-2015 çулсенче çамрăк çемьесене çурт-йĕр туянма патшалăх енчен пулăшасси» республика программине саккуна пăсса вăл субсиди илнĕ. Николаев хăтлă хваттерте пурăннă çĕртех çурт-йĕр лайăхлатакансен черетне тăма суя документсем хатĕрленĕ. Унтан черете пăхăнмасăрах социаллă тÿлев илнĕ. Мĕнле майпа тетĕр-и? Ара программăпа усă курма тивĕçлĕ çамрăк çемьесене шута илсе черете тăратаканĕ – район администрацийĕн строительство, экономика тата общество инфраструктурин аталанăвĕн пайĕ. Унăн пуçлăхĕ вара Николаев. Республика хыснинчен Çĕрпÿ районне укçа куçсанах хайхи пайра ĕçлекене хăй патне чĕнтернĕ. Ăна социаллă тÿлев çитни пирки хайĕнчен маларах черетре тăракансене пĕлтерме хушман. Лешĕ те пуçлăхран иртме хăяйман çав, вăл каланине пĕр сăмахсăр пурнăçланă. 2010 çулта Николаев черете пăссах социаллă тÿлев правин свидетельствине илнĕ.

Ултав тăрă шыв çине тухсан район прокуратури унран 465 400 тенкĕ шыраттарса илме суда тавăç тăратнă (ыйтăва тивĕçтернĕ).

Тÿресем уголовнăй ĕçе пăхса тухса Д. Николаева 2 çуллăха условнăй майпа айăпланă. Унсăр пуçне 70 пин тенкĕ штраф тÿлеме тивĕ. К. Семеновпа И. Федоров вара амнистие лексе айăплавран хăтăлса юлнă.

**А. ПУШКИН, Çĕрпÿ район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ.**

## Ултав серепине çаклансан

Ватă çынсем ыттисене шаннине кура хура чунлă çынсем вĕсене самантрах шăнман пăр çине лартса яраççĕ. Нумаях пулмасть ултавçăсен серепине Шупашкарти 78 çулти хĕрарăм çакланнă. Урамра уçăлса çÿрекен кинемей патне икĕ палламан хĕрарăм пырса тăнă.

– Сан çинче пăскăнчăк пур, – хăратнă вĕсем ăна. – Тăванăрсене те пăснă. Пăскăнчăка халех сирмелле, унсăрăн инкексинкекрен тасалса пĕтеймĕр.

Унтан ултавçăсем хĕрарăма сыватма укçа ыйтнă. «Укçине «тасатса» тавăрса паратпăр», – ĕлплантарнă вĕсем. Хăраса ÿкнĕ пенсионер тÿрех килĕшнĕ. Алă айĕнче укça пулманнипе ăна банкран илнĕ. Кĕçех ултавçăсен аллине 889 пин тенкĕ куçнă. Лешсем хĕрсех пысăк укçана «тасатма» пикеннĕ. Унтан ватăна укçа тĕркĕмне каялла тыттарнă та хăвăрт куçран çухалнă. Хĕрарăм «сиплевçĕсем» кайсанах хайхине уçса пăхнă. Ак тамаша! Укçа вырăнне ниме тăман хут купи тухса выртнă.

**Л. АЛА.**

**Кăмăл турам – пĕр турам**

# Юрă – халăх чунĕ

1981 çулта Чăваш радио çамрăксен «Ăраскал» кăларăмĕнче «Шăпчăксем» юрă шăрантарсан вăл чăваш тĕнчинче çиçĕмле хăвăртлăхпа сарăлнă.

Ешĕл çулçисем те палăрмаççĕ,
Шап-шурă лараççĕ çĕмĕртсем.
Савăнса кайса ĕнтĕ юрлаççĕ
Кĕмĕл саслă юрăç шăпчăксем....

Çамрăксен чун-чĕрине тыткăнланă çепĕç юрă. Ăна Вăрнар каччисем Родион Петров баянистпа Александр Моисеев эфира кăларнă. Çакăн хыççăн «Шăпчăксем» юрра Иван Христофоровпа Валентина Смирнова артистсем хăйсен репертуарне кĕртеççĕ. Кăшт вăхăт иртсен ăна «Çавал» ансамбль юрлама пуçлать. Çĕнĕ юрра Георгий Ефимов сăввипе Родион Петров кĕвĕленĕ. Тĕлĕнмелле пысăк çитĕнÿ!

Пĕрремĕш юрă халăх хушшинче анлăн сарăлни çамрăк композитора хавхалантарать, çунат хушать. Юрий Сементĕрĕн «Сарпикем, хĕр пикем», Петĕр Ялкирĕн «Анюкпа Ванюк», Владимир Никифоровăн «Ах, пĕлмен-çке хĕр чунне», Анатолий Хумăн «Саншăнах» сăввисемпе çырнă юрăсем те Виталий Петровпа Виталий Гордеев юрăçсем, фольклор ансамблĕ «Çавал» тата Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕ çине çинех юрланипе пур çĕре те çитеççĕ. Ытти юррисем те радиопа телекурав передачисенче тăтăшах пулаççĕ.

Родион Петрович Петров 1957 çулхи çĕртме уйăхĕн 28-мĕшĕнче Вăрнар районĕнчи Авăр çырми ялĕнче çуралнă. Ашшĕ, Петр Петрович, колхозра счетовод пулнă. Паллă вăйăç спектаклсенче вылянă, хут купăс каланă. Амăшĕ, Нина Ивановна, хуçалăхри фермăсенче выльăх-чĕрлĕх пăхнă, илемлĕ юрланă. Çемьере тăватă ача ÿснĕ. Петĕр тăватă-пилĕк çултах купăс калама вĕреннĕ. Чăрăшкас Хирлепри сакăр çул вĕренмелли шкулта 7-мĕш класра ăна ашшĕ баян туянса парать. Çак ялти вăйăçсем Иванпа Константин Федоровсем пулас композитора баян калама вĕрентеççĕ. Ывăлĕ килте баян пĕрмисене çăмăллăн тăсса «линкка-линкка» кĕвĕ калама пуçласан ашшĕ-амăшĕ чунтан савăнать.

Сакăр çул вĕренмелли шкул хыççăн Родион тÿрех Çĕрпÿри культурăпа çут ĕç училищине çул тытать. 1976 çулта оркестр уйрăмне пĕтерсен Вăрнар районĕнчи Калининăри Культура çуртĕнче илемлĕх ертÿçинче ĕçлет. 1977-1979 çулсенче Чехословакире çар тивĕçĕсене пурнăçлать, салтаксен ансамбльне ертсе пырать. 1979-1981 çулсенче Элĕк районĕнчи Ехремкассинчи тата Вăрнар районĕнчи Чăрăшкас Хирлепри Культура çурчĕсенче илемлĕх ертÿçинче вăй хурать, хăйĕн ăсталăхне малалла туптать.

1981 çулта Родион Петрова Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамбльне баянистконцертмейстерта ĕçлеме чĕнсе илеççĕ. Пысăк сцена çинче те вăл пĕтĕм чун хавалне парса тăрăшать. Чăваш халăх юррисенчи сăнарлăха, çепĕçлĕхе ăша хывать, авалăх сывлăшне туйма хăнăхать. Васкамасăр çĕнĕ юрăсем кĕвĕлет. Çав хушăрах ялсенчи музыкăна юратакан пултарулăх коллективĕсене пулăшать, Муркаш районĕнчи Мăн Сĕнтĕрти Культура çуртĕнчи «Янаш» ансамбле шефа илет.

Çавра уйăх та çĕр каçа çутатмасть теççĕ. Родион Петровича темиçе хутчен те тĕрлĕ района ĕçлеме йыхравланă ĕнтĕ. Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕн йышĕнчен ниепле те уйрăлаймасть – пурте питĕ çывăх, тăван. 1994 çулта Мăн Сĕнтĕр ял пуçлăхĕсем ăна хăйсен ялне яланлăхах ĕçлеме илсе каяççĕ.

Мăн Сĕнтĕр – пысăк ял. Ĕмĕр каялла вырăс пек пулнă. Халĕ тĕрлĕ халăх çыннисем пурăнаççĕ. Юнашар Сĕнтĕр юхан шывĕ вĕтĕ хумсемпе чĕлтĕртетсе юхать. Сиплĕ сывлăшлă çĕршыв. Юмахри пек тавракурăм самантрах Родион Петровăн ĕмĕчĕсен тĕнчине уçать. Вăл ялти Культура çуртĕнче «Янаш» юрăпа ташă ансамбльне ертсе пыма тытăнать.

«Сĕнтĕрсем ансамбле «Янаш» ят панă, – çырать Виталий Станьял таврапĕлÿçĕ. – Авалхи халапсене ĕненес пулсан Янаш – чăваш улăпĕ. Вăл Атăл тăрăхĕнчи çĕрсене ĕçпе те, хĕçпе те хÿтĕленĕ. Хăйĕн вăйĕ çитмен чухне ăна ăмăрткайăк пек ивăлĕсем, шур акăш пек хĕрĕсем пулăшнă. Пĕрре тан мар кĕрешÿре ватă Янаш пуçне хунă. Вăл пурăннă, çапăçнă çырмана халĕ те Янаш варĕ теççĕ. Çав вырăна унăн хĕрĕ – Хĕрпике – тăшмансенчен тасатса кăларнă пулать».

Родион Петрович чи малтан ансамблĕн репертуарне çĕнетет.

– Ансамблĕн пултарулăхне аталантарма Раççей тата ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Людмила Нянина, Раççей тата ЧР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Александр Ангаров нумай пулăшрĕç, – хăйĕн пуçламăш утăмĕсемпе паллаштарать Родион Петрович. – Пирĕн йыш та мĕнпур йывăрлăха çĕнтерчĕ. Репетицисен, çулçÿревсем те ăнăçлă иртрĕç. Пур çĕрте те куракансен кăмăлне уçма пуçларăмăр. Янаш ятне ямарăмăр. Вячеслав Яковлев балетмейстерпа Александр Иванов концертмейстер-аккомпаниатор та пĕтĕм ĕçе пĕлсе те çаврăнăçуллă йĕркелерĕç...

Хресчен чĕри, чунĕ-кăмăлĕ самантлăха та канăç памасть Родион Петрова. Пушă вăхăт тупăнать – тăван ялне, Авăр çырмине, кайса çаврăнать, çăлкуçри сиплĕ шыва тутанса пăхать. «Янаш» ансамбльте ĕçлеме пуçланă-пуçламан ăна ялти ачасен «Тополек» ясли-садра музыка ертÿçи пулма сĕнеççĕ. Виçĕ çул ĕçленине те сисмест кунта – юрлать-ташлать ясли-сад. Ĕçрен пушанма та ĕлкĕреймест – Мăн Сĕнтĕри вăтам шкула музыка вĕрентекенĕ пулма чĕнсе илеççĕ. Çав хушăрах «Янаш» ансамбльти ĕçсем те кал-кал пыраççĕ.

Юрă-ташă ăстисем çуллен Муркаш районĕнчи акатуйра пулаççĕ. 1995 çулта «Янаш» ансамбль Хĕвеланăç Çĕпĕрте Кемĕр облаçĕнчи чăвашсен фестивальне хутшăнать. Кузбасс çыннисем Янаш улăп ятне ĕмĕрлĕхе хăйсен асĕнче хăвараççĕ. Тепĕр çулхине ансамбль Швецири Реттвик хулинче халăхсен хушшинчи «Шведское лето» фольклор фестивальне хутшăнса лауреат ятне тивĕçлĕ пулать. 2003 çулта Пушкăртстан республикине гастроле кайса килет. 2006 çулта «Янаш» ансамбль Венгри республикинчи Сегедра халăхсен хушшинчи фольклор фестивалĕнче пулать... 2011 çулта Коми республикинчен «Завалинка» фольклор фестивалĕн лауреачĕ пулса таврăнать.

«Янаш» халăх ансамблĕн юрри-ташши Чăваш радиопа телекурав передачисенче тăтăшах пулнă. Туслă йыш хăйĕн юрри-ташшипе Чăваш Ен çыннисене çуллен «Атăлçи çăлкуçĕсем» фестивальте савăнтарать.

«Родион Петров – чăвашсен музыка культуринче сумлă та паллă ят, – палăртать ЧР композиторĕсен ассоциацийĕн ертÿçи Николай Зимин музыковед. – Вăл – çĕре яхăн юрă-кĕвĕ çырнă композитор, баянист тата хормейстер. Юррисем чăваш тĕнчинче анлă сарăлнă. Родион Петров ертсе пыракан «Янаш» ансамбль Чăваш Енре чапа тухрĕ, Раççейре те, ют çĕршывсенче – Венгрире тата Швецире – палăрчĕ».

Родион Петрович хăй те калаçура çынсемпе вашават.

– Пирĕн концерта Чăваш Республикин пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та килсе курчĕ, – терĕ вăл çĕкленÿллĕн. – Сĕнтĕрсен ансамбльне çĕнĕ баян парнелерĕ. Ырă ĕçшĕн – хаклă парне. Пирĕн туслă йыш ÿлĕмрен те юрă-ташăра чун ăшшине тăван халăха парса тăрĕ.

Кăçал вара «Янаш» ансамбль районти «Чечеклен, Муркаш ен!» смотр-конкурсра çĕнтернĕ. Пултарулă коллектива ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов та концерт баянĕ парнеленĕ.

Юрă – халăх чунĕ. Родион Петров юррисенче наци туйăмĕсем палăраççĕ, нумайăшĕ фольклор структурипе пуян. Ăна итлекен вара е савăнать, е хурланать, е шухăша путать. Юрă – пурнăç ÿкерчĕкĕ, пурнăçри савăнăçпа куляну. Юлашки вăхăтра композитор Петр Воробьев сăввипе «Икĕ чĕре пĕрле чух» юрă кĕвĕлерĕ. Ăна Петрпа Антонина Красновсем тÿрех Мăн Сĕнтĕр çыннисен умне кăларчĕç. Кунта çакна та палăртса хăвармалла, ял халăхĕ Родион Петров Виталий Станьял сăввипе çырнă «И-эх, хĕрĕсем, каччисем» юрра та питĕ кăмăллăн йышăнчĕ.

Петр Воробьев сăвăç – профессийĕпе агроном, ял администрацийĕн пуçлăхĕнче те ĕçленĕ, «Янаш» ансамблĕн ырă кураторĕ пулнă. Халĕ те купăсне те калать, юрлать, ура хуçса ташлама та пултарать. Ялти чиркÿ хорĕнче те хăйĕн илемлĕ сассипе уйрăлса тăрать.

Родион Петров тата Атапай ялĕнче те «Сурпан» вокал ансамблĕ йĕркелесе ячĕ. Юрăçсен йышĕнче 10 хĕрарăм: Елена Колбакова, Регина Быкова, Людмила Зайцева, Ольга Петрова... Пĕрне ырласа теприне хурлаймăн – сассин илемĕ такам чунне те тыткăна илĕ. Кăçал, Культура çулталăкĕнче, ансамбль Çĕрпÿ тăрăхĕнче икĕ хутчен, Элĕк районĕнчи Ехремкассинче ял уявĕнче, Муркаш районĕнчи чылай ялта пулса хăйĕн пултарулăхне кăтартнă. Мăн Сĕнтĕрти ветерансен çуртĕнче пурăнакансем ялти артистсене паян кунчченех ырăпа асăнаççĕ.

Родион Петров – ЧР композиторĕсен ассоциацийĕн членĕ, ЧАССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш музыка обществин тава тивĕçлĕ деятелĕ. Пĕлтĕр вăл Чăваш патшалăх педагогика университечĕн музыкăпа педагогика факультетĕнчен куçăн мар майпа вĕренсе тухрĕ. Халăх ырлăхĕшĕн тăрăшса ырми-канми ĕçлет Родион Петрович. Ĕçÿсем ăнса пычăр, вăй патăр!

**Герман ЖЕЛТУХИН.**

**«КАПКĂН» КĔТЕСĔ**



Ял хĕрарăмĕ

# Шура аппа – 100 çулта

**Республикăра 100 çул е ытларах пурăнакан сахал. Вулакана вĕсенчен пĕринпе Куславкка районĕнчи Минкĕш ялĕнчи ырă кăмăллă та хастар Александра Соловьевăпа паллаштарасшăн. Вăл 7 çулта тăлăха юлнă. Ашшĕпе амăшĕ выçăпа вилнĕ. Пĕчĕк Шурăна аппăшĕ çитĕнтернĕ.**

«Мĕн кăна курман пулĕ пурнăçра, – аса илет иртнине кинемей. – Çĕр сухалама та, тырă акма та, ăна пухса кĕртме те вăй-хала шеллемен. Кунĕн-çĕрĕн колхозра вăй хунă. Тракторпа та ĕçленĕ. Ытларах лашапа. Хире иртерех тухас тĕллевпе унтах, лаша витинче, пурăнаттăмăр».

Александра Осиповна мăшăрĕ Михаил Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă. Вăрçă вучĕ витĕр тухайман вăл, унтах пуçне хунă. Ачисене, Вальăпа Кольăна, пĕчченех çитĕнтернĕ Шура аппа. Паллах, хунямăшĕ те пулăшнă. «Чылай хĕрарăм упăшкисене вăрçăран кĕтсе илеймерĕ. Мĕн тăвăн? Вăрçă. Вилнĕ çын хыççăн каяймастăн – пурăнмалла. Ытти çын пекех чуна хытарса пурăннă, ĕçленĕ», – тет ватă.

Çак кунсенче вăл 100 çулхи юбилейне паллă тунă май Куславккари «Волна» кафере савăнăçлă каç иртрĕ. Унта район администрацийĕн пуçлăхĕ Валентин Колумб та хутшăнчĕ. Юбиляра РФ Президенчĕн



Владимир Путинăн Тав çырăвĕпе паллаштарчĕ.

Шура аппан уявне тăванĕсемпе пĕрлех ял çынни те йышлăн пуçтарăнчĕ. Пурте вĕсем Александра Осиповнăна парнесемпе чечек çыххисем парса савăнтарчĕç. Минкĕшри культура çурчĕн ĕçченĕсем юрăташăпа хавхалантарчĕç. Хăйне хисепленĕшĕн Шура аппан савăнăç куççулĕ юхрĕ те юхрĕ.

Тепĕр кунне юбилей уявĕ Минкеш культура çуртĕнче тăсăлчĕ. Унта хутшăннисем тутлă пулă шӳрпи çисе сăйланчĕç, юрласа-ташласа савăнчĕç.

Александра Соловьева паян тăватă мăнукĕпе тата мăнукĕсен çичĕ ачипе савăнать. «Турра шĕкĕр, ачасем лайăх манăн, – савăнса пĕлтерет вăл. – Николай манпа юнашарах пурăнать. Нумаях пулмасть Валентина хамăр тăрăха куçса килчĕ, халĕ пĕрлех пурăнатпăр. Мана пулăшса пурăннишĕн ачасене пысăк тав».

Уçă кăмăллă, ĕçчен кинемее ял-йыш та кăмăллать. Ахальтен мар ĕнтĕ юбилее чылай халăх пуçтарăнчĕ, ватă çынна сума сурĕ.

**Вячеслав ПЕРОВ.**
**Куславкка районĕ.**

## Нумай ачаллă çемьесене – ĕне

Пĕтĕм тĕнчери Çемье кунĕ тĕлне Раççейри ача-пăча фончĕн Иваново уйрăмĕ вырăнти нумай ачаллă çемьесене ĕне парнеленĕ. Майракаллă шултра выльăха туянма облаçри судьясем фонда укçа куçарнă.

Парнелӳ килĕшӳвĕнче çапла палăртнă: ĕне пăруласан пушмака нумай ачаллă тепĕр çемьене памалла. Вăкăр пулсан çак çемьерех юлĕ.

Икĕ çемьене парнеленĕ ĕнесем нумаях пулмасть пăрулană. Вăкăр пăрушка амăшĕпе пĕрле юлнă. Тепĕр çемьери пушмак Лычево ялĕнчи Жибановсен çемйине лекнĕ.

Çак программа Кузбасс тăрăхĕнче те ăнăçлă пурнăçланать. Ялта пурăнакан пилĕк е ытларах ача усрава илнĕ çемьесене ĕнепе тивĕçтереççĕ. Ленинск-Кузнецк, Новокузнецк, Гурьев тата Белов районĕсенче 15 çемье ĕнеллĕ пулнă. Вĕсене ветеринари тишкерĕвĕ урлă кăларнă ăратлă выльăх параççĕ.

Паллах, йышлă ачаллă çемьешĕн ку парне питĕ пĕлтерĕшлĕ. Хăшĕ-пĕри, тен, хушма хуçалăха аталантарма пултарĕ. Унсăр пуçне ĕне юр-варĕ ачасене кирлĕ. Сĕт пулсан сĕтел çинче çу, турăх, тăпăрчă, хăйма тата ытти апатçимĕç те пулать. Çавăн пекех усрава илнĕ ачасене ĕçе явăçтарма та меллĕ. Вĕсем выльăхчĕрлĕхе юратма вĕренĕç, ĕне сума хăнăхĕç.

Ку тăрăхра ялта пурăнакан нумай ачаллă çемьесене 2009 çултанпа пулăшаççĕ. Асăннă çултан пуçласа паянхи кунччен вĕсене 1000 ĕне тата 12000 кролик парнеленĕ.

Кемерово облаçĕнче те «Ĕне парнеле» программа 5 çул ĕçлет. Нумай ачаллă тата сахал тупăшлă çемьесене кунта ĕне çеç мар, качака та парнелеççĕ. Ялта пурăнакан 100 ытла çемье вырăнти ыр кăмăллăх фондне ыйтса çырнă. Паян ĕне хакĕ 40-50 пин тенкĕрен кая мар. Паллах, çакă çемьешĕн сахал мар нухрат.

Ку сăваплă пуçарăва ыр кăмăллăх фончĕ хăй çине илнĕ. Нумай ачаллă çемьесене ĕнепе тивĕçтерес ĕçе пурте хутшăнма пултараççĕ.

## Кил-йыш савăнăçĕ

Нумай ачаллă çемьесене Чăваш Енре те пулăшма тăрăшаççĕ. Акă Комсомольски районĕнчи Тукай ял тăрăхĕ Наталия Васильевна Хлебникова валли электронлă аукцион мелĕпе пурăнмалли çурт-йĕр туяннă.

Наталия Васильевна Тăманлă Выçли ялĕнче пурăнать. Унăн ултă ача. Чи кĕçĕнни – 5 уйăхра, асли – 17 çулта. Халĕ ачасене хăтлă çуртра выляса-кулма, телевизор курма май пур.

Çĕнĕ çуртăн калăпăшĕ – 92,5 тăваткал метр. Вăл санитари, техника правилипе тата нормипе килĕшсе тăрать. Виçĕ пысăк пӳлĕм. Çавăн пекех ванна, санузел пур. Çурта электричество, газ тата шыв кĕртнĕ.

# Ял тухтăрĕ

**Алевтина Журавлева Йĕпреç районĕнчи Эйпеç ялĕнчи фельдшерпа акушер пунктĕнче вăй хурать. Унăн ĕç стажĕ – 42 çул. Çак професси ăна амăшĕнчен куçнă. Вăл та ĕмĕрĕпех медицинăра тăрăшнă.**



Ял тухтăрĕ ваттивĕттин сывлăхне пăхса тăрать. Тин çуралнă ачасен сывлăхĕшĕн те яваплă вăл. Унсăр пуçне çамрăк ăрăва республикăра иртекен «Белая ромашка», «Я помогаю победить туберкулез» уйăхлăхсене явăçтарать. Шкулта ашшĕ-амăшĕн пухăвĕнче тĕрлĕрен темăпа туха калаçать.

Пушă вăхăт тупăнсанах «Пилеш» фольклор ансамблĕне çӳрет. Алевтина Гурьевна чăваш юрри-кĕввине питĕ кăмăллать.

Хăйĕн ĕçне тивĕçлипе пурнăçланăшăн ăна çулсеренех Хисеп хучĕсемпе чыслаççĕ. Маларах вара вăл «Районти сывлăх сыхлавĕн чи лайăх ĕçченĕ» ята тивĕçнĕ.

## Тăван ял ытамĕнче

Николай Удяков маларах мăшăрĕпе Шупашкарта пурăннă. Ялта çуралса ӳснĕскере чунĕ ватлăхра тăван кĕтесе туртнă. Мăшăр хулари хваттерне ывăлне парнелесе яла пурăнма куçнă.

Николай Ураскилтри вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн хĕсметре пулнă. Шăпа ăна Пĕтĕм тĕнчери ачасен «Артек» лагерьне те илсе çитернĕ. Кунтах пулас мăшăрĕпе паллашнă. Ольга Георгиевна та ун пекех вожатăйра тăрăшнă. Вăл Липецк хулинче çуралса ӳснĕ. Савнине пула Чăваш Енри Çĕмĕрле хулине килсе вырнаçнă. 1964 çулта икĕ çамрăк пĕр çемьене пĕрлешнĕ.

Удяковсен çемйи пĕр вăхăт Кострома хулинче пурăннă. Кил хуçи педагогика институтĕнче ĕçленĕ, çав вăхăтрах аслă шкулта пĕлӳ илнĕ. Шăпах çакăнта пурăннă чухне Удяковсем икĕ ача усрава илнĕ. Каярахпа Николая направленипе Пермь тăрăхне янă.

Чылай вăхăт тĕнче тăрăх çӳренĕ хыççăн çемье Шупашкара куçса килнĕ. Кунта иккĕшĕ те тĕрлĕ ĕçре вăй хунă. Ачисем те çемье çавăрнă, халĕ тăватă мăнук çитĕнет.

Удяковсем ялта икĕ хутлă çурт лартнă. Николай пушă вăхăтра ӳкерет, сĕтел-пукан ăсталать. «Çиччĕмĕш хĕл каçрăмăр кунта», – тет Ольга Георгиевна. Кил-тĕрĕшри ĕçсене тума ачисем те килсех çӳреççĕ. Ашшĕ-амăшне чунтан хисеплеççĕ вĕсем.

**Владимир ЕГОРОВ. Элĕк районĕ.**

Страницăна Валентина ПЕТРОВА хатĕрленĕ.

ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунтикун, декабрĕн 1-мĕшĕ**
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
19.00 «ПЕХИЛ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ДЕРЕВО ДРУЖБЫ» (12+)
20.30 «ЗНАК КАЧЕСТВА ЧУВАШИИ» (12+)
20.45 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Ытларикун, декабрĕн 2-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ÇĔР ТИВЛЕЧĔ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
20.30 «БУМЕРАНГ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Юнкун, декабрĕн 3-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ПАТШАЛĂХ КАНАШĔ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
20.30 «СПОРТ ДЛЯ ВСЕХ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Кĕçнерникун, декабрĕн 4-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЯЛАН ЯНРА, ЧĂВАШ СĂМАХĔ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «АВАН-И» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ЗАКОНОДАТЕЛИ» (12+)
20.30 «МЕСТНОЕ САМОУПРАВЛЕНИЕ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Эрнекун, декабрĕн 5-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
19.00 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА!» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «БУХТЫ-БАРАХТЫ» (6+)
20.30 «НАОБУМ» (12+)
21.00 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
21.15 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Шăматкун, декабрĕн 6-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
9.00 «ВРЕМЯ ВКУСА» (12+)
9.45 «ПАТШАЛĂХ КАНАШĔ» (12+)
10.00 «НОВГОРОД ГОСПОДИН ÇИНЧЕН КАЛАНИ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
17.30 «БУМЕРАНГ» (12+)
18.00 «АКТУАЛЬНОЕ ИНТЕРВЬЮ» (12+)
18.30 «ЗНАК КАЧЕСТВА ЧУВАШИИ» (12+)
19.00 «ЗАКОНОДАТЕЛИ» (12+)
19.30 «ÇАПЛА ПУЛТĂР!» (12+)
20.30 «КАÇХИ ТĔЛПУЛУ» (12+)

**Вырсарникун, декабрĕн 7-мĕшĕ**
9.00 «ТАКИЕ ЖЕ» (12+)
9.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
9.30 «ФЛЕЙТĂПА КАЛАМАЛЛИ МАНĂÇА ТУХНĂ КĔВĔ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «ЗАКОНОДАТЕЛИ» (12+)
17.30 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (12+)
18.00 «НАОБУМ» (12+)
18.30 «КУЛĂШ КУСТĂРМИ ÇĔНĔЛЛЕ!» (12+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Ноябрь, 26 – юнкун | Ноябрь, 27 – кĕçнерникун | Ноябрь, 28 – эрнекун | Ноябрь, 29 – шăматкун | Ноябрь, 30 – вырсарникун | Декабрь, 1 – тунтикун | Декабрь, 2 – ытларикун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 7.49 | 7.51 | 7.53 | 7.54 | 7.56 | 7.58 | 7.59 |
| | анать | 15.27 | 15.26 | 15.25 | 15.23 | 15.22 | 15.22 | 15.21 |
| Кун тăршшĕ | | 7.38 | 7.35 | 7.32 | 7.29 | 7.26 | 7.24 | 7.22 |
| УЙĂХ | тăхри | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать |
| | кунĕ | 4-мĕш кун | 5-мĕш кун | 6-мĕш кун | 7-мĕш кун | 8-мĕш кун | 9-мĕш кун | 10-мĕш кун |
| | (12 сехет тĕлне) | Ту качаки паллинче | Шывтăкан паллинче | Шывтăкан паллинче | Пулă паллинче | Пулă паллинче | Сурăх паллинче | Сурăх паллинче |

## «ТĂВАН АТĂЛ»: ÇĔНĔ НОМЕР

### Альбина МЫШКИНА
# Çын çинчи ача
### Калав

Подъезд умĕнчи вăрăм сак çинче хĕп-хĕрлĕ чечек çыххи тытса ларакан сарлака хулçурăмлă та илемлĕ çамрăк салтака кашни иртен-каян пăхапăха иртет. Ватти хисеплесе, вăйпитти мăнаçланса, çамрăкки ăмсанса. Вăл çеç никама та асăрхамасть. Инçетелле чăтăмсăррăн тĕсесе такама кĕтет – сывлама та хăрать тейĕн çав, килĕсене таврăнакан халăха пуçне пăрмасăр, куçне илмесĕр тинкерет. Кама кĕтет, кама шырать вăл. Кăна хăй çеç пĕлет.

Салтак хăй пурнăçĕнче çак сак çинче сахал мар вăхăт иртернĕ. Кашнинчех çапла кĕтсе, шанса. Халĕ вăл, паллах, ултăçичĕ çул каялли типшĕм те пĕчĕк ача мар, анчах чĕри çаплипех канăçсăр тапать. Иртен-каяна ача чухне вăл ăмсанса пăхатчĕ, паян ун çине юратса та хисеплесе пăхаççĕ. Анчах вĕсенчен нихăшĕ те çак Улăп пек каччă таçта чун тĕпĕнче упранса пурăнакан туйăмĕсемпе çаплипех пĕчĕк ача пулнине пĕлмест. Маттур салтакăн вара ун чухнехиллех хăйне усрава илнĕ амăшĕн чун ăшшипе ăшăнса тĕнчери чи телейлĕ çын – хăй ачине хÿтĕлеме пултаракан амăшĕн пархатарлă ывăлĕ – пулас килет...

– Ывăлăм, çĕклемсем йывăр, пулăшсамччĕ мана.

Сак çинче урине силлесе ларакан пĕчĕк Петĕр пуçне унталла-кунталла пăрса илчĕ. Кампа калаçать ку хĕрарăм. Çывăхра пĕр чун та çук вĕт-ха.

– Ятна пĕлместĕп те-ха сан ăнне – ывăлăм тенишĕн кÿренместĕн пулĕ. – Петĕр ларакан сак çине сумккисене лартнă май калаçрĕ хĕрарăм.

Петĕр именсе кайрĕ, тăрса тарас кăмăлĕ те пулчĕ, анчах темĕн чарчĕ ăна. Сăмах чĕнмесĕрех тăчĕ, хăйпе юнашар лартнă пысăк сумккăна çĕклеме пăхрĕ – вăйĕ çитмерĕ, чутах çĕре ÿкеретчĕ. "Ак, лекет ĕнтĕ пĕçĕркке, вăрçса тăкать" текен шухăш вĕлтлетрĕ пуçĕнче. Хĕрарăм вара ăна-кăна палăртма шухăшламарĕ те пулас – çаплипех лăпкăн чĕвĕлтетсе Петĕре чи çăмăл çĕклемне тыттарчĕ.

Хăйпе пĕр подъездри иккĕмĕш хутра пурăнакан çак хĕрарăма Петĕр курман мар. Яланах пĕччен çÿрет вăл. Çемйи çук-ши? Кăна ача пĕлмест.

– Айта, ывăлăм, ирт, ирт. Сумккăсене кухньăна кĕртсе ларт-ха, – çаплах чĕвĕлтетрĕ хĕрарăм.

Петĕр именсе хăйĕн кивĕ пушмакне хыврĕ те сумккăсене, сĕтĕрсе тенĕ пек, кухньăна илсе кĕчĕ. Сĕтел çинчи шурă çăкăра, пылак пĕремĕке курсан пуçĕ çаврăнса кайрĕ пек пулчĕ – паян вăл, вăхăт халĕ каçхи улттăмĕш сехете кайнă пулин те, нимĕн те çиме ĕлкĕреймен-ха. Амăшĕ самантлăха тесе тухрĕ те – çухалчĕ. Пĕрле ĕçекен юлташĕсене тĕл пулнă ĕнтĕ вăл каллех.

– Ывăлăм, тавах ĕнтĕ сана. Мĕнле тав тăвам-ши. Манпа пĕрле каçхи апат çиме килĕшмĕн-и? Мана, ват çынна, хисеп тусам ĕнтĕ. Иртенне апатланма та тивмен пулĕ-ха сана?

Петĕр вăтанса кайрĕ, хăйне мĕскĕн выçăнне хунăнах туйăнчĕ ăна. Палламан çын хваттерĕнчен хăвăртрах тухса тарас килчĕ, анчах хырăм выççи ураран урана ирттермерĕ...

Çапла паллашрĕ Петĕр хăйĕншĕн усрав амăшĕ-ши е хресна амăшĕ пулса тăнă Алина Ивановнăпа. Çав кун уншăн пач урăх, çĕнĕ пурнăç пуçланмăшĕ пулнине Петĕр халĕ çеç ăнланать. Унччен ача пурнăçĕнче пĕр телейлĕ кун пулман, çавăнпа вăл пурнăç урăхла та пулма пултарасси пирки пĕрре те шухăшламан...

Алина Ивановнăн подъезд умĕнче кĕтсе илесси Петĕрĕн йăлана кĕчĕ ĕнтĕ. Кашни каç, çынсем ĕçрен килĕсене таврăннă тĕле, хăйĕн яланхи вырăнĕнче пулчĕ ача. Малтанах именетчĕ хĕрарăмран, анчах тахăш самантра вĕсем пĕрпĕриншĕн пачах ют çын пулнине те манчĕ. Алина Ивановна ыйтнипе лавккана та, аптекăна та вăш-ваш чупса кайса киле пуçларĕ. Хĕрарăм вара ăна кашнинчех вĕри апат, пылак чейпе конфет-пĕремĕк çитерчĕ. Ку ман ывăлăн пĕчĕкленсе юлнă кĕпе-йĕмĕ тесе самаях çĕнĕ тум-тир те тăхăнтарчĕ. Яланах çĕтĕк тумпа çÿрекен Петĕршĕн вара ку чи пысăк парне пулчĕ.

Пĕррехинче тем сăлтава пула Алина Ивановна ĕçрен кăнтăрлачченех таврăнчĕ. Подъезд умĕнче ĕççĕр аптраса ларакан Петĕре курсан самаях тĕлĕнчĕ вăл:

– Чирлемерĕн пулĕ те, мĕншĕн шкулта мар вара эсĕ? Каникула кайма иртерех марим-ха?

Ачан ирĕксĕрех хăйне уйăх каяллах шкултан кăларса яни çинчен каласа памалла пулчĕ.

– Мĕншĕн? – пĕр ыйту çеç пачĕ Алина Ивановна.

– Япăх вĕреннишĕн. Учитель мĕн каланине çийĕнчех ăнланаймастăп эпĕ. Çавăнпа мана ухмахсен шкулне куçараççăшăн пулчĕç, "ыттисемпе тан вĕренме ăсу çитмест санăн", – терĕç. Эпĕ унта каймастăп. Вулама-çырма пĕлетĕп – мана çитет.

– Вĕренме пăрахма юрамасть. Айта кĕрсе тумлан та шкула каятпăр. Иккĕн. Халь вĕренмесен, пĕлÿ илмесен чăнласах ухмаха тăрса юлатăн, – ача калаçăвне итленĕ май вăйлăрах та вăйлăрах тарăхнине пытармасăр каларĕ хĕрарăм. – Эсĕ пурăнма çеç пуçлатăн – сана ăс та, пĕлÿ те нумай кирлĕ пулать.

Петĕрĕн шкула пачах та каяс килмерĕ, хăйĕнчен кулнинчен, мăшкăлланинчен ытла нимĕн те курман вăл шкулта. Вĕрентекенсем те, ачасем те ун çине темле йĕрĕнчĕклĕн пăхнăн туйăнать ăна. Анчах хăй чĕререн хисеплекен аслă аппăшĕн кăмăлне хуçас килмерĕ унăн. Тепĕр тесен, учительсем кăшкăрса вăрçнине илтми, сивĕ сăмахпа чĕрине тивтернине тахçанах туйми пулнă вăл - Алина Ивановна çеç, шкулти пек, ухмах тесе тĕксе ан ятăрччĕ!

Пĕр сăмах хушмасăр утрĕç хĕрарăмпа ача шкула. Мĕн пирки шухăша кайрĕ-ши Алина Ивановна? Петĕрĕн питĕ пĕлес килчĕ çакна, анчах ыйтма шикленчĕ. Хĕрарăмăн ытти чух ăшшăн кулакан куçĕсенче тарăхупа хаярлăха курчĕ вăл. Çак хаярлăх хăй çеç куçасран хăрарĕ.

Алина Ивановна тÿрех шкул директорĕ патне кĕчĕ, Петĕре вара йышăну пÿлĕмĕнче лартса хăварчĕ. Аслисем мĕн çинчен калаçнине малтанласа илтмерĕ вăл, анчах тем вăхăтран вĕсем самаях хĕрсе те хытă калаçма пуçларĕç.

– Патшалăх шкула учительсен ĕç укçи пултăр тесе мар, ачасене пĕлÿ пама, вĕсене пурнăç çулĕ çине тăратма тытса тăрать. Ача япăх вĕренет пулсан - учитель вĕрентме пĕлмест! Ун пек учитель шкулта кирлĕ мар!

– Сирĕн ялан учитель айăплă! Класра пĕр ача мар, çирĕм пиллĕк!

– Вĕрентме пĕлмен е ачасемпе пĕр чĕлхе тупма пĕлейменнисен картиш шăлма каймалла! Нихăшне те батарей çумне çыхса лартман. Шкулта ĕçлесшĕн пулсан – ачасене хисепleme пĕлччĕр! Петĕр ĕлкерсе пыраймасть-тĕк – çителĕклĕ ĕçлемесçĕ эппин унпа. Вăл мĕнле пурăннине, мĕн çинчен ĕмĕтленнине пĕлесçĕ-и вĕсем. Кунĕ-кунĕпе выçăллă-тутăллă пурăннине пĕлесçĕ-и? Ăна шкула таврăмасан эпĕ сире пурне те шкул картишне шăлма ямалла тăватăп. Пĕтĕм тĕнчене çĕклетĕп. Сире пурне те кунта ĕçлемелле мар тăватăп!

Нумай калаçрĕç директорпа Алина Ивановна. Петĕре вĕрентекен кашни учителе чĕнсе илчĕç. Петĕр хăйне халĕччен кам та пулсан çакăн пек хÿтĕленине астумасть. Чунĕ çемçелчĕ унăн, куçĕнчен куççуль юхса анчĕ. Никам та ан куртăр тесе ахаль те пĕксе ларакан пуçне тата та аяла усрĕ.

*(Вĕçĕ пулать.)*



**Çывăх вăхăтра вулакан патне «Тăван Атăл» журналăн ноябрьти номерĕ çитĕ.**

**КĂЛАРĂМРА**

ÇЕÇПĔЛ Мишши. Чăваш сăмахĕ

Юрий АРТЕМЬЕВ. Çĕн çĕре чĕнен чĕре

**ПРОЗА**

Василий ПЕТРОВ. Каçару. Повесть

**ПОЭЗИ**

Николай КУШМАНОВ. Çул иртнĕçемĕн ытларах саватăп

Марина КАРЯГИНА. Палиндромсем

**ТИШКЕРÿ**

Виталий СТАНЬЯЛ. «Ĕçĕм ĕç-и? Çиçĕм ĕçĕ!»

**КĔÇĔН ПРОЗА**

Альбина МЫШКИНА. Çын çинчи ача. Калав

**ЭТКЕР**

«Николай ШУПУÇÇЫННИ». Çуралнăранпа 125 çул çитнĕ май

**КУÇАРУ**

Булат СУЛЕЙМАНОВ. Анне. Калав

**АВТОГРАФ**

Николай ФОМИРЯКОВ (Хумирек Микулĕ), чăваш ăс-хакăлĕн управçи

**ÇЕМЬЕ ВУЛАВĔ**

Иван ЛИСАЕВ. Улюн ташши. Калав

**ÿНЕР**

НЕÇÇЕ Кулли (Николай Енилин)

Юрий ЯКОВЛЕВ. Вĕçĕмсĕрлĕх ачи

**КАШНИ ÇЫН – ХĂЙ ТĔНЧЕ**

Ирина ПУШКИНА. Людмила Айдак: «Вăл хăйĕн сукмакĕпе чыслăн утса тухрĕ»

**АСЛĂ ÇУЛ АЙККИНЧИ ПУРНĂÇ**

Роза ВЛАСОВА. Урхамахăн кăмăлне пилĕк пÿрне пек пĕлет

**«СУНТАЛ» – АЧАСЕНЕ**

Владимир СУРКОВ. Аташса кайни. Калав

**ÇĔНĔ КĔНЕКЕ – ÇĔНĔ ТĔНЧЕ КУЛĂШ КĔТЕСĔ**

Василий РУЗАНОВ. Çаплаччĕ ĕлĕкрех.

Маргарита ПРОКОПЬЕВА. Яла намăс кăтартан. Петĕр ЯЛКИР. Хăюллă айван

**ТĔРĔ**

**ЧĂВАШ КАЛЕНДАРĔ**


## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРÿСЕМ

*ПРОДАЮ СУТАТĂП*

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89674704677.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89674704677.

**ТĂВАН АТĂЛ**

**«Тăван Атăл», «Капкăн» çырăнсан тунсăхламăн, тусăм, нихăçан!**

КАПКĂН

| Индекс | Кăларăмсем | Çырăнтару хакĕ |
|---|---|---|
| 11529 | Тăван Атăл | 319-08 |
| 24608 | Капкăн | 185-04 |



«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăйтытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – В.В. ТУРКАЙ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)
Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 [1] регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла. 17 сехетре алă пуснă.
Заказ 4519
Тираж 4323


* Рекламăпа пĕлтерÿсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерÿсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.